31-324
270

ХУСАНКАЙ П.



# СĂВĂСЕМПЕ ПОЕМĂСЕМ

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
Мускав ★ 1931

ХУСАНКАЙ П

# САВАСЕМПЕ ПОЕМАСЕМ

СССР-ти ХАЛАХСЕН ТЕП ИСТАТТЕЛСТВИ
МУСКАВ • 1931

# ТУПМАЛЛИ.


| | стр. |
|---|---|
| Автономисен маршĕ | 3 |
| Вунвиççĕ | 6 |
| Итле, Кермани! | 9 |
| Пул примерлă ленĕнçĕ | 11 |
| Хĕрлĕ — хĕвел тĕсĕ | 16 |
| Менелник йе кăрлаҙăн 22-мĕш | 20 |
| Капкасра | 27 |
| Сывла, Пакку | 37 |
| Тинĕс ташши | 42 |
| Колхос Канаш | 45 |
| Кипте | 50 |
| 2×2=5 | 54 |
| Ехмин çакăнсан | 57 |
| Кели Кĕркурине | 59 |
| Тĕлĕнмелле тĕлĕк | 68 |
| Тершавĕн палăкĕ умĕнҙе | 75 |
| Рамçин профессӑран йулашки лексийĕ | 78 |
| Çĕнĕ çулҙхăнисем | 83 |
| Есир хăш йал — пĕлместĕп, еп — Перекет касси | 88 |
| Микул турăпа Кăмиссар Курийĕ | 95 |
| Пайанхи поемă | 106 |
| Ишшак Верти | 137 |
| Сона | 146 |



Уполн. Главлита № В-3330 Заказ № 1458 Тираж 5000 экз.

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва, Шлюзовая набережная. 10.

## АВТОНОМИСЕН МАРШĔ.

Ҫăваши,
вырăси.
тутари —
мĕн пурĕ
пĕр ҫăлтăр айне!
Пĕтĕм Сойусăмăр
утарнĕк,
утат
ҫĕнтерӳсем патне.
Пĕрре,
иккĕ,
виççĕ,
тăваттă...
Марш,
прикатă хыççăн
прикатă!
Ата, респуплĕкĕм,
йара пар;
хуҫи те
ху,
хăни те —
ху.

Ану ҫинҫе
    кӗрлетӗр трактӑр,
тӗп пултӑр
    выҫӑ виҫ пуссу.
Вӑрӑм курӑк
    патӑр улӑх,
тырӑ-пулӑ
    пултӑр тулӑх.
Ӳсех,
    ман ирӗклӗ ҫӗршывӑм,
тӗреклӗ пул ес йаланах.
Ӗҫле,
    тӑрӑш,
        кӗреш,
            ан ывӑн,
ан ус
    йун витнӗ йалавна.
Пулҫӗ тӑвӑллӑ Октапӗр.
Пулӗ,
    тӑвӑпӑр тата пӗр.
Пӗтӗм ҫӑмӑр ҫӗре
            пӗр харӑс —
рапоҫҫисен прикатине!
Унҫҫен
    хӑйуллӑн
        тытса кар ес
тепрер
    вунҫуллӑх карттине.
Атӑр пурте
    алла-аллӑн.

Шухăш çирĕп,
    ĕмĕт —
        паллă.
Ђăваши,
    вырăси,
        тутари —
мĕн пурĕ
    пĕр çăлтăр айне!
Пĕтĕм Сойусăмăр —
            утарнĕк,
утат
    сотсиалисăм патне.
Пĕрре,
    иккĕ,
        виççĕ,
            тăваттă...
Марш,
    прикатă хыççăн
            прикатă!

# ВУНВИҪҪĔ.

Пур
ҫĕршывра та
хаваслă
туй пирĕн;

таҫта хĕрри ун,
таҫта ун вĕҫĕ...

Хапрăкĕ,
савăђĕ,
йалĕ,
уй-хирĕ, —
пурте
йантратăр:
вунвиҫҫĕ!
Кивви,
вырт
йул!
Умра
ҫĕн
ҫул.
Епĕр
ҫак аслă ҫултан
пăрăнари, —

хамăр тарпа,
    йун-шăмпа
      хывнă çулйĕр.
Пулҫĕç кунсем —
      пире
      пыйтă парăнмарĕ,
çитрĕç кунсем —
    тĕлĕнет
      пиртен пур çĕр.
Турк-
  Çип,
    Йалмаш.
Ту,
  сып,
    тавлаш.
Аслă пăланăн
    аслă сатаҫĕ:
ҫи малтине
    хуса çит,
      тапта кай.
Атăр пайан
    таҫăран та таҫă
ĕç
  çарĕпе
    ыткăнар
        аттака.
Хал пар,
  çут ил.
Кам «мар» —
  уттил.

Кам
хăй хапхи айĕнҫен
вĕрсе выртĕ
ҫаплă Октапĕрĕн
çак паратне —
çав çынсене
пайан кун
харам пыр
тер,
кам
урамра —
çав пире
ăратне.
Нăкрах
ура.
Йантрат
урра.
Пур
çĕршывра та
хавaслă
туй пирĕн;
тăп-тăрă урă,
çамрăк ун пиҫĕ.
Хапрăкĕ,
савăҫĕ,
йалĕ,
уйхирĕ —
пурте
йантратăр:
вунвиççĕ!

# ИТЛЕ, КЕРМАНИ!

1929 çулта Керманире пулса иртнĕ вăрçа хирĕç конферентсийе кĕме Ђăвашпа Монкол республĕкĕсен преставиттĕлĕсене Керманђин Мускаври поссољстви висă памасăр тăнă.

Кермани —
    ирĕк ăслăлăх тĕнђи,
Кермани —
    Кенрĕх Кейнĕ
        çĕрĕ-шывĕ.
пĕлтер мана:
    илемсĕр туйăнђим
ђăвашпала
    монколăн
        хĕрĕ-ывăљ?..
Керманђи!
    ђăмăртанђĕ
        ђышкăм манăн,
еп —
    çав мĕлйун аçиатран
        пĕри.
Истори куçĕнђен
    ес пытанаймăн,

вăл çавтери тиркевсĕр,
çав тери!
Çĕр ђăмăрĕ
икке
пайланнă ђух
Çак çылăхна
асилĕн ес,
Кермани.
„Каçару çук сана,
каçару çук!“
тесе
тĕнђе тăрăх
ылхав йантранĕ.

# ПУЛ ПРИМЕРЛӐ ЛЕНЕНҪӖ.

Ҫӗре
хӑйраннӑ хӗҫ иккен,
кӑкӑр
сӳнми вуҫах пулсан —
йепле
ҫулти пиҫен-кикен
ан хӑрӑнтӑр
есир пуссан.
Куҫсем —
мӑшӑр ҫӑлтӑр ҫунаҭ,
ҫӗрти
електӑр ҫӑлтӑрӗ.
Пӑхсан
ҫӗрхал
кӗртет ҫуна,
ҫухалнӑ шанҫӑк
йалтӑрӗ.
Анҫах
сӑнсем хавас
тесе
еп
шӑхӑрасшӑн мар
шӗвик,

пайан
аҫа,
ыран вёсем
пулмашкăн тивёç
польшевик.
Ансат
йункштурăм
тăхăнма,
çăмăл
лартмашкăн
КИМ палли. —
Шалтан
тёреклёлет хăвна
малашнехи
штрумсем ваҫҫи!
Респуплёкён
пётмен ёçё —
тулта,
пӳртре,
çулла,
хёлле
ес пул
примерлă
ленёнçё:
вёрен,
вёрент,
ёçле,
тёлле.
Вёрен
çёнё етем
пулма,

вĕрент
ӳсен шăллусене,
ĕçре пиçсе
хытар хулна,
кĕрешĕве ҫăмса
çĕнел.
Фашшисăм тупписемшĕн
халъ
Совет çĕрĕ
пулсассăн тĕл —
патрунлă пултăр
сан
тăха,
макçимккăна
пусмашкăн пĕл.
Йут хум
çĕлен пек
симĕсĕн
çыранăмăр çине
шусан —
хĕрлĕ караплă
тинĕсĕн
мĕлйунлă шефĕ
ес,
ан ман.
Советсемпе
електăра
хушсассăн —
кăмунисăм вăл.

Йавăр рехметтĕк пек
тăрат,
анҫах
хăҫан
ҫĕнни
ҫăмăл?
Илле пророк
лашипеле
Илйиҫ ҫутти
тавлашнă ҫух
Комсомол
тепĕр
шеф илет:
— краҫҫын шăршисĕр
ламппă ҫут! —
Йашка ҫакмашкăн,
ҫей ҫĕртме,
ĕне сума,
ҫу уҫлама,
кĕпе ҫумашкăн,
пир тĕртме —
кӳлер
ҫав ҫиҫĕм-ҫулăма.
Қашни йала
хăт кăнтăрла,
хăт каҫхине
пĕр сăн кĕртме
малтан
хăвна
електăрла —

хуса кăлар
сив тĕттĕме.
Респуплĕкĕн
пĕтмен ĕçĕ —
тулта,
пӳртре,
çулла,
хĕлле
ес пул
примерлă
ленĕнçĕ:
вĕрен,
вĕрент,
ĕçле,
тĕлле.

# ХĔРЛĔ — ХĔВЕЛ ТĔСĔ.

## МАРШ.

Çапăр
        патвар аллăрпа
                парапанăра,
вĕрĕр
        кӳпшек ӳпкĕрпе
                хӳтхĕре.
Епĕр вăрçмастпăр,
        анҫах
                тапрансан вара
ҫас
        пирĕн
                тĕл паллине
                        ӳт кĕрет.
        Хăйрăр хĕçе-сăнна,
        ан тутăхтар.
        Ҫикĕсене сăна,
        типĕтĕр тар.
Икĕ сăрпа çеç
        сăрланҫĕ планетăмăр,
икĕ тĕс çеç
        пĕрпĕрне
                сехĕрлет.

Кам
сивĕ билĕмшĕн —
шурă айне тăтăр,
пурăнăç тĕсĕ —
хĕрлĕ!
Хĕрлĕ —
хĕвел тĕсĕ,
хĕрлĕ вăл йун.
Хĕрлĕ çĕнтĕр тесе
епĕр мĕлйун.
Пирĕн
Çĕпĕр сĕм вăрманĕнђе,
Йалттăра,
Йейĕк,
Купаң —
пур патшалăхĕпех
иртнĕ кунсен
çĕнтерӳ йĕрĕ
йанк тăрат
тин
станран тухнă
çĕнĕ
пăшал пек.
Вранкĕли-анкĕли,
ђех йе Колђђак —
лекрĕ такан кĕле —
веç калла ђак!
Епĕр утатпăр
хирсем,
тинĕссем тăрăх.

Ирĕк респуплĕк,
майак пек çутат!
Епĕр утатпăр,
пыратпăр,
кĕтсе тăрăр
ҫикĕ татса килен
пилĕк çулта.
Тухăр хĕçе-хĕçĕн
тĕс çине тĕс.
Шурă тĕс,
çепĕçĕн
ирĕлĕн ес.
Ей,
шупка йунлă,
çурта ӳтлĕ-тирлĕскер,
тупăк шăрши
çапнă
суккăр тĕнҫе!
Курăсăн
есĕ халҫ —
йепле епир тискер
пусмăрлăх,
мăшкăл,
суйа умĕнҫе!
Епĕр çунтарăпăр,
çук кăçару.
Тăкнă йун-тарăмăр
вут пек хĕрӳ.
Çапăр
патвар аллăрпа
пăрапанăра,

вĕрĕр
    кӳпшек ӳпкĕрпе
        хӳтхĕре.
Кам
    Ворошшилăва
        кăлĕ хаљ
            „аллăра“?!
Çук,
    вăл пайан
        çирĕм иккĕре.
    Хĕрлĕ —
        хĕвел тĕсĕ,
    хĕрлĕ вăл йун.
    Хĕрлĕ çĕнтĕр тесе
    елĕр мĕлйун.

---

## МЕНЕЛНИК

### ЙЕ КĂРЛАҪĂН 22-мĕш.

Пайан
ман менелник.
Тума тăвап та,
ҫыслатăп та
хама еп
ҫĕр ҫинҫе,
анҫах
ҫулсемҫке —
ҫирĕм те тăваттă,
утан ҫулсем
ҫулланăҫем
инҫе.
Мĕн ҫухлĕ ѐҫ умра,
мĕн ҫухлĕ ҫыхвăр
кĕмесĕр йулнă
пурнăҫ сатаҫне!
Ҫуралнă,
теҫҫĕҫ,
сарăмсăр та йывăр —
касса тураннă,
йун тăкнă анне.

Хирурк çĕççи пек çеç те мар
турană
реакси
суланса
шăм аллипе.
Çĕршыв
вĕренĕ
хупхура хуранăн,
ҫăнрав сĕнен
асап сăмали пек.
Кăрлаҫăн çирĕм иккĕмĕш.
Кам манĕ
Тупассăв атмиралăн
туппине?
Йура
ҫĕрĕ йунпа
сăрлас кампани
миçе çынна
вырттарҫĕши
ўпне!?
Ак
ватăскер
Путтилăв ĕçлекенĕ;
хăй пекех
ватă
турăшне йăтса,
ыгтишĕн мар —
çăкăр ыйтма
вăл килнĕ,

анҫах...
хупларĕ салп
йăваш сасса.
Ав
алăри аҫипеле
хĕрарăм
аран çеç
тарăн кĕрт тăрăх
ашаҭ:
„Çăкăр! Çăкăр!“ —
айух,
тутанаймарăн —
çитсе таптарĕ
ескатрон лаша.
Такан каҫи кăна
ирсе хăварҫĕ
пуçне ватса
аҫанăн миммине.
— Кас,
ҫик,
тура!!!—
ĕрлетĕ
утлă кварти.
Туранă,
каснă,-
ҫикнĕ —
ĕлкĕрнĕ...
Кăрлаҫăн çирĕм иккĕмĕшĕ.
Тепĕр

салху ĕçпе
хуралтĕ
çав тысла.—
Вăл кун
пур ĕç тĕнти,
пĕр етем йевĕр,
машшин тарса
хăй çулпуçне
тыслат.
Вăл кун
историйе
халлап-йумахăн
кĕрсе вырнаçрĕ
пирĕн хуйхăмăр.
Вăл кун
мел çуктĕ пек
тĕррĕн йулмашкăн
Вăл кун
вилмесĕр
вилĕм туйрăмăр...
Телейлĕ еп —
ман менелник
нихçан та
çăмăл хавaслă
пулас çук ĕнтĕ.
Çуралнăшăн
çынлах
хаваслансан та
çулпуç çукки
карат
сĕм йупăнтă.

Телейлĕ еп —
нимле ĕçме-çиме те
тăрантас çук
мана
килентерсе,
мĕншĕн тесен
пайанхи кун —
пĕлетĕп —
хура çăкăршăн
вилнĕ
питĕрсем.
Мавсолейе
кĕретĕпи еп халĕ
йе
Хĕллехи кермен умпе
иртеп —
пĕртен пĕр шухăш:
пурши
ман
вăйхалăм
çултан сулах
ÿсен Октапĕрте?
Çулпуçăн
çутă,
çирĕп сăнсăпаҙĕ,
ун
шухăшпа тăртаннă
мăн çамки
мана
сăмахсăр
ăнлантарса паҙĕ:

шав малалла ут,
пĕр канми,
ҫакми...
Мĕн ҫухлĕ ĕҫ умра!
Мĕн ҫухлĕ парăм!
Еп
парăмлă сана,
сар Турккестан,
сана,
ҫаҫвансăр
ирĕклĕ хĕрарăм,
сана,
пионер ҫарĕ,
хут те ҫтан
йантрат пулсан та
„ту-ту-тут кĕрс-там“.
Еп
парăмлă сана,
Купаҫ тӳремĕ,
сана,
Кикантăн елеваттăрĕ...
Мĕскер ҫинҫен
ҫырса
еп ĕлкĕреймĕп —
ҫавна
пурне те
парăма кĕрĕп.
Анҫах
ҫулсем...
ҫулсем ак
ҫирĕм тăваттă,

утан çулсем
    çуллен айаккарах.
Çампа
    пайан
        хисеплесе пăхап та —
нихçан та
    парăм
        пĕтмесрен хăрап.

---

# КАПКАСРА.

Капкас
тесессён
манăн асăмра
ак çакăн пек
сăнсем
шуса тухаççĕ:
салхулă Круçи,
макăран сурна...
Ељпрус,
Каçпек,
кăшт нўрлĕрех ту каçĕ...
Сăрт хушшипе —
тăвăр сукмакпала
Хатши Мурат,
Шамил
вĕçсе иртеççĕ.
Пеђђорĕншăн çунан
сăпă Пела,
кăкшăм йăтса пыран Тина
пиртеђђĕ...
Хайар Тамарă.
Аллинђе ханђар.

Хайар та
хӳхӗм,
хӑй кӑђӑк туртат.

Пӗр каçшӑн
пурнӑçна илме-
ан ђар,
вара
ес кӗрӗн
вӑл ђӗнен çурта...

Ађаранпах,
мӗн шкул сакки çинђен
çапла
кураттӑм еп сана,
Капкас.

Йе Лермӑнттӑв,
йе Пушкӗн хыçӗнђен,
йе Толстойпа —
ман шухӑшӑм
ђас-ђас
вӗçсе çитсе
улхађђӗ
сан çине.

Пӗлмен пуђ çав,
пӗлмен пуђ еп ун ђух
Раççейӗн
таса мар ӗçӗсене;
ним тишкӗрмесӗр
шаннӑ
айван ђун.

Анҫах
    ҫапах
        Макҫим Макҫимӑҫсем,
Воронтсовсем —
    туртмастҫӗҫ ҫӗреме.
Сан ирӗклӗ тӑвусене
                хӗссе
вӗсем кӑшӑлласса
            сиэеттӗм еп.

* * *

Ҫаплаҫҫӗ.
    Икӗ пуҫлӑ ӑмӑрткайӑк
ӗмӗрлӗхех
    ҫырлахрӗ,
        тейӗпӗр.
Романӑв несӗлӗ
    халҫ —
        тамӑкраи,
йе ҫӑтмахра —
    пире вӑл пурӗпӗр.
Пире пулсан
    сыв пултӑр
        Ҫшукашвили —
ниҫта пӑркаланми
    тӳр кӑппиттан.
Каламӑпӑр епир:
    „вӑл Ленӗн ывӑлӗ“
каламӑпӑр:
    „вӑл Енкӗлспе пӗр тан“.
Ҫук,

пирĕн
тишкĕрӳллĕ саманамăр
апла виçме хушмаст
çын ыррине.
Хĕрли хĕрлĕн,
хури хуран сăрлантăр,
Тĕпком
ан пултăр
турăш вырăнне.
Калатпăр
Сталĕн,
шухăшлатпăр:
партти.
Калатпăр
партти,
Сталĕн шухăшра.
Ăна
мĕлйунлă çар
аталантарҫĕ,
вăл хаҫ
тĕреклетет хăй
çав çара.
Ишет карапăмăр,
ҫылайҫҫен ишĕ,
нумай ҫулсем
тĕл пулĕ
çул çинҫе.
Ан тĕлĕр, кăппиттан!
Етем килйышĕ

пит нишлĕ халĕ,
çулăмăр —
инçе.
Сотсиалисăм — тĕл,
ку — хамрăн,
пирĕн.
Унпа кăна
çырлахмăпăр епир.
Патвар карапăмăр
хăйулăн,
вирлĕн
комун рейсне
тапраиĕ
килес ир.
Ун ђух:
Каçпек,
Монплан
Памир та —
пурте
тӳписемпе
пуçтайĕç пĕрпĕрне.
Анђах
ăна
тепрер поет сăн кӳртĕ, —
уттоппи
тейĕç
манăн тĕррĕме.

* * *

Йăлаши ку
йе
урăхи сăлттавĕ? —

Капкас тени
    туртатха поета.
Ак
    рифмă ђăптине
        хуллен салтап еп,
йалав пек йатсене
            тавпа йăтап.
Нумай пулмаст
    хавшак ђĕрелĕ паттăр —
Йеççенĕн
    çĕклесе кунта ђеркке.
Ун хыççăн
    Майакковски те
            пĕр тапхăр
килсе
    сурса хăварђĕ
            Тереке.
Вĕсем хаљ çук.
    Масар та
        крематтори...
Ђăнахи ку? —
    пăйав та
        пÿл пăнђи...
Кĕмсĕртетен
    ђĕр пурăнăç мотторĕ
нађар кÿме пек
            мелсĕр
                ÿпĕнђĕ...
Пайан ак еп.
        Куçсем
        кураççĕ витĕр,

хăлхам та çивӗӗ,
шухăш та вӗри.
Ӗӗлхем ман
йут,
анӗах —
ӗӗре таппи пӗр,
ăнланăпăр
епир
пӗрне пӗри.
Круçин сăвăçисем,
тав пурсăра та!
Пире
пӗр пек ӗмӗт
пӗтӗçтерет.
Анӗах
çук мар тăр,
сирӗн хушăра та
ман
ӗмӗрхи тăшманăм
пуртăр вӗт.
Нумайӗш
Руставели йаӗӗпе
Парнас тӳпи
тăрласшăн
кунта сирӗн.
Вӗсемшӗн
к л а с сăмах
кăрӗанкă пек,
вӗсемшӗн
пурнăç
туйăнат хаӗ ӗирлӗн.

— Круçин культтурĕн
ылттăн ĕмĕрĕ
сӳнсе çухалтĕ, —
терĕçĕ вĕсем.
Çак
хурлăхлă тостпа
панккет пĕтрĕ.
Кама усси
ку нишлĕ сăмахсен?
Çук, таматта!
Нимрен малтан
вăл мар,
ес
пилĕк çуллăх карттине
карсамтĕ!
Килес поет вальли —
пĕлсе тăрар —
мĕнле ӳсет
сотсиалисăм сатĕ.
Ман
çамрăк тусăм —
харсăр Машшашвили!
Кӳр аллуна,
тыт
хĕрлĕ мăйрака.
Пире
пĕр кĕрешӳ
моплисатсилĕ,
пĕр револютси çеç
пире паха.

Парнасшăн мар
кĕрешĕпĕр епир,
навус пулса выртсан та
хурлăх мар.
Анҕах
ырлантăр çĕр,
çемçелтĕр хир
çĕнĕ тулла
хăмăш пек
улăхма.
Пĕр револҕутси:
пурăнăç хавасĕ
пĕрпек валеçĕнтĕр
темсене!
Хам халлă тусăм,
Круçире пĕр сасă,
çак кăмăлпа
сана
еп ал сĕнеп.
Вĕри çĕршыв.
Сиксе йухан Кура.
Кунта
ман
çамрăк йĕрĕмсем те пур.
Пырса курсам, поет,
пырса курах,
ман
сулхăн сĕршыва та
пырса кур.

Сана
    еп,
        Атăлăм çине ансассăн,
хумсем çинче
            сиктерĕп
        кимĕпе.
Капкас йатне,
            пĕр çак
        хавалсă каçшăн,
                ниxçан та
        сансăр
        аса илмĕп еп.

## СЫВЛА, ПАККУ!

Сывла, Пакку!
Сывла, масут столитси!
Мăкăрлантар
хура тĕтĕм!
Еп хам
хура пӳртре çуралнă
теҕҕĕç,
сывла, Пакку,
сывла, масут столитси!
Пайан
еп
урăхла тăна кĕтĕм.
Çĕнелнĕ шухăш
нимĕнрен те тарăн,
фанттан шавне
кӳретĕп сăввăма.
— Ҕипер хĕрсенĕн тутине
ан парăн,
çĕнелнĕ шухăш
нимĕнрен те тарăн,
тесе
тупа тăватăп еп
хама.

Ҫӗртен тухан
хӑватлӑ
хура йунсӑр
поеҫи те
пурнаймӗ тӗнҙере.
Ҙасрах,
ҙасрах
ӗмӗтӗрсене йусӑр!
Ҫӗртен тухан
хӑватлӑ
хура йунсӑр
савма та пултараймӑн
ҫак ҫӗре.

* * *

Асхапатран
тухайса епӗ тартӑм,
ӗнер ҫулта,
пайан ӗнтӗ —
Пакку.
Кунта —
Амерӗк.
Пӗтӗм пурнӑҫ —
нехтӑ.
Кӗрлет
Пипи-Ейпат,
Палаххана.
Хура масут
хурлантармаст
пӗрнех те,

пĕр
    еп кăна мĕн
        урăхла хăна.
Ман ҫунăмра
    вĕҫĕхĕррисĕр улăх,
ҫĕрешĕн
    хаклă
        сывлăмлă ҫеҫек.
Кунта
    илемлĕх
        пĕтĕмпех мĕн урăх,
етем хавасĕ —
    урăх
        пĕтĕмпех.
Тарай тутри пек
        симĕсĕн-кăвакăн
пĕркерĕ
    нехтă
        канăҫсăр хума.
Ҫӳлти ҫăтмахшăн,
        есĕ кĕлтăватăн,
ăна
    ҫĕртех
        пулатĕ иккен тума.
Сĕм ҫатăр
    карҫĕ
        кăнтăр лăпкă каҫĕ.
Лăпланҫĕ тинĕс.
    Тухрĕҫ ҫăлтăрсем.

Фанттанĕсем
    синкерĕн тăрăхлаççĕ:
— Хитреи пирéн йурă,
                    пĕлтерсем?.. —
Хура пашне тăрри
                    мана йунарĕ:
— Пăрах пуçна усмашкăн ес,
                    пăрах;
Ђăнах
    Пакку урамĕсен хунарĕ
тия тулнă уйăхран вĕт çутăрах... —
Еп хам та
        халђ,
        пăртак пуçа йăтсассăн,
йĕрес пек
    ўкĕтлетĕп
        .хама хам!
Илтетни ес —
    мĕскер йурлаť ав
        массă,
куратни ес —
    йалав илемĕ
        кам?

# ТИНЁС ТАШШИ.

Макçим Корккине'

Тапхăр-тапхăр —
тĕттĕм симĕс,
тапхăр-тапхăр —
сепсенкер...
Ма шавлатши
Хура тинĕс?
Мĕн шыратши вăл?
Мĕскер?
Мĕн çитмен,
мĕн йăлăхтарнă
ун
кăмăлсăр
кунçулне?
Ма тăкатши вăл
тăварлă
акăш-макăш куççульне?
Тинĕс çийĕн,
пĕлĕт çумĕн
йавăнат
хăмăр халат;

пĕр
хăй çеç пĕлен,
хăй ҫунĕн
сăмахне
шыва калать.
Ушкăн-ушкăн
ухă йевĕр
улăхать вăл
çӳлелле;
хумсене
хăйпе
ҫĕнет тĕр,
йыхăрать тĕр
хăйпеле.
Ушкăн-ушкăн
мамăк майлăн
йерипен
вăл йарăнать.
Сĕмсĕр тинес
айлăм-айлăм
алтăнса хавхаланать.
Кăтăрать,
кĕрлет,
асатĕ,
çырана кисрентерет.
Кăпăкланнă
хĕн-асапĕ
çăлăнма
кĕтет
ҫерет.

— Çитĕ —
    ҫартăн,
        çитĕ —
            пӳлтĕн! —
тенĕнех
    вăл
        ăнтăлат.
Ак
    каллех
        çĕмрен пек тӳртĕн
ыткăнат
    пĕҫҫен хăлат.
Вăл
    кăвар пек пĕсехеллĕ,
вăл —
    çапçутă,
        йапйака,
вăл хашкат...
    анҫах —
        ан шеллĕр
çав
    йăвасăр кайăка!

# КОЛХОС КАНАШ.

Хуйха-суйха
Пăртаксĕ вĕçтерме
Çуралнă çĕршыва
Еп кĕрсе тухрăм.
Тĕп Атăл хĕрринҫен
Вăл утмăл çухрăм
Шăп утмăл çухрăм
Кивĕ Сиктĕрме.

Тăватă çул хушши
Килсе курманҫҫĕ
Çак çирĕклĕ,
Çырмаллă улăха.
Ăшра каллех
Аҫа ҫĕри тапранҫĕ...
Шăппăн кулса
Телейлĕн улăхап.

Утатăп.
Мана хирĕç пĕр хĕрарăм;
Пăхат, пăхат хăй
Тутăр айĕнҫен...
Ҫăнах та çавăши?..
Çук,
Палламарăм,

Вăл та мана
Пĕлмерĕ пулĕ тен.

Вăрман сăмсахĕнҫен
Анаç çынсем;
Хĕрсем те пур;
Хаваслăн алхасаççĕ:
— Ку кам иккен?
— Е, çавă вĕт...ҫĕнсем...
— Айух!
Пире пăхасла мар ку каҫҫă...—

Çапла кăна
Тăрăхласа иртеççĕ.
Ну йурĕ
Мĕн тăвăнха,
Кулĕçин...

. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

Асилтĕм эпĕ
Ват Шупашкара,
Асилтĕм
Айакри йут хулана та...
Умри ыраш
Сапсарă шăркара

. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

...Килйышсăр,
Çуртсăр-йĕрсĕр,

Ҫӑн, ҫӑнах
Ҫак шухӑшпа еп кайрӑм
Йал тавра.
Куҫпа куҫап
Анкартисем тӑрӑх,
Вӗҫри хапха патне
Хам ҫывхарап.

Лере ав киремет.
Пӗртен пӗр ват ҫӑка
Ҫаралнӑ тураттисемпе
Йӑвашшӑн,
Кукша старик пекех,
Ҫӗнӗ йӑха
Аваллӑх йумахне
Йарса парасшӑн.

Мӗскер калас тетши
Ҫав харсӑр улӑп?
Мӗнле хыпар
Усранӑ вӑл хаљҫҫен?..
Ҫапла сӗнксе тӑратӑп
Пӗр нӗҫҫен.

. . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . .

Каҫхи хӗвел
Йулашки хут савса
Ҫӑкан ҫерҫенкӗ тӑррине
Ҫуптурӗ.
Унтан лӑпкӑ ҫырма тӑрӑх
Тӳптӳрӗ

Çитерђĕ çил
Пĕр кĕвĕлĕ сасса.
Хĕрсем уйав пуçласа йађĕç пулĕ...
Йурри, йурри! —
Ђуна çурса анаŧ.
Пыра
Хаваслă-хурлăхлă куççулĕ
Пăђăртаса хĕстерђĕ
Пĕр самант...
Анђах елеки
Вырăнсăр кунта.
Илтетĕп:
Пусăра
(Пĕђђен те мартăр)
Тӳлек аслатилле тăнкăртатаŧ
Канма кĕме тăварăннă тăрактăр.
Илтетĕп:
Ђан çапаŧ,
Анђах ђиркӳ...
Ђиркӳ хĕрессĕр,
Ун тăрри йалавлă.
Уйри çынна ĕçрен кĕме мĕн ку
Ĕмĕр ђăваш ђунне ђĕтретнĕ паллă
Ман Сиктĕрме,
Ман Кивĕ Сиктĕрме
Вăл çук мĕн тĕнђере,
Пыр та калаç! —
Йал тытăннă ерттеллĕн ĕçлеме,
Ун йађĕ хаљ кĕскен
Колхос Канаш.

Йут мар мĕн еп кунта.
Çĕнелнĕ йалăм
Манран та маларах пыраті тен...
Мĕн калăн, йатлă сăвăçă,
Мĕн калăн
Канаш тепрер вун йат çитĕнтерсен?
Салам, çĕнĕ хунав!
Йаланах хапăл,
Йалан ман куçăм
Сирĕн йеннелле.
Калаймăп епĕ хама хам:
„Ан ватăл“
Есир хаљ —
Йалан хатĕр! —
Темелле. —

# КИЛТЕ.

Мăкланнă çийлĕ
Вырăсла хапха,
Ик йенĕпе —
Ик шăнкăрҫи йăви...
Ăнтан кайса
Пăхса тăратăпха:
Ҫăнах та çаки?
Çурҫĕ те çави?..

Çавах.
Урамалла виç ҫӯреҫе.
Хăйăпала хĕстернĕ
Кантăк витĕр
Пăхса ларат
Имшеррĕн пĕр ҫеҫек,
Çулçи сархайнă...
Ахăр пĕлтĕрхи тĕр.

Пӯртрен
Çĕрĕк кăмпа шăрши кĕрет,
Кĕтессисем
Уксах ура пек тайлăк.
Ăвăс пĕренесем
Икви çĕ рет

Таçтан, çĕртен,
Пураса тухнă майлă.

Кĕресши,
Кĕрес марши ку киле?
Çак кил хуçишĕн
Еп пĕртен-пĕр шанђăк...
Кĕрес теместĕп хам, —
Кĕрес килет...
Пĕр хытрĕ ман кăмăл,
Тепре пушанђĕ.

Кĕретĕп карташне,
Пӳрте кĕретĕп,
Нимех те хускатмарĕ ман ђуна.
Килçуртшăн
Хурланман пек хам пĕрре те,
Анђах т̆емскершĕн
Çунмаллах çунап.

Мађђа лутра,
Урай пăртак хура пек...
Турамăш хаљ те
Ађипех ларат̆...
Унтан ытла инçех те мар
курап еп —
Ларат̆ шур çӳçлĕ карђăк
Хашакра.

Вăл темĕншĕн
Пĕркенђĕкпе пĕркеннĕ,
Туйа тесессĕн —
Ватă хăй пăртак.
Пырса вулатăп:

К л а р ă Ђ е т к ĕ н тенĕ,
Хаваслă хурлăх
Тулђĕ кăкăрта...
Хĕвел анманха.
Йарăм-йарăм çутă
Хуçкаланса кĕрет
Пĕр кантăкран.
Ађа ђухнехисем
Ăшра хаљ çук та,
Çапах ес çав вăййа
Пăхса тăран...
Тăвата çул
Тăвата кун пек иртрĕ,
Пайтах ĕçсем
Еп куртăм тĕнђере.
Ырри те пулђĕ тçр,
Нуши те витрĕ,
Çапах —
Çунсах сӳнмерĕ мĕн ђĕре.
Пĕлетĕп:
Питĕм-куçăм кирпĕђленнĕ,
Ђиперех мар
Кĕтеслĕ тăваткал.
Çапах—
Çынсем çинђени,
Хам çинђени—
Йурланă йуррăм
Кăмăла калкал.
Ан тив, ан тив,
Ђĕре ĕмĕр вăл çунтăр,

Кунçул кӳленҙӗк мар вӗт—
Йухăм шыв.
Çук,
Йухăм шыв та
Мар тăр çав вăл,
Йунтăр шывпа кăна
Ишсе тухайăнши?..

Каçар мана,
Мăкланнă килӗм-çуртăм!
Хумсем тăрăх
Кӗсменсӗр çӳресе,
Сана та
Куçма куçăн килсе куртăм
Сана та,
Çӗмрӗк куçлă ҙӳреҙе.
Ан хуйхăр.
Ес те урăх çутă кӳртӗн.
Ӳстерӗн урăх,
Йешӗл ҙеҙексем...
Анланнă пек
Сывларӗ пăҙă пӳртӗм,
Çӗмрӗк куç çеç
Анланайми тӗксӗм.

## 2 × 2 = 5.

Вĕрентекенĕ ватă,
Вĕренекенĕ çамрăк.
— Икĕ хут иккĕ тăваттă,
Хут те йепле çавăрăр. —

Пиҍĕ пĕркеленҍĕк,
Пĕлĕм пек ун пиҍĕ.
Урок ерехметтĕк
Пайан пит те çивҍĕ.

Хура-хĕрлĕ мрамăр
Кĕнеке хупламĕ.
Мрамăр кукăр-макăр, —
Кам ăна палламĕ?

Малинĕн-Пуренĕн.
Тесе çырса лартнă.
Сĕтрĕнсе çўренĕ
Авалхи сатаҍнĕк.

Уттил сырйона та
Лекеймесĕр йулнă.
Икĕ хут иккĕ тăваттă
Халҍ те пулин унăн...

— Ентри, — тет уҍҍитлĕ. —
Тух туска патне. —

Ентри персе ҫикрӗ
Партта калпакне.

— Ентри, — тет учҫитлӗ, —
Тыт аллуна пур.
Икӗ хут иккӗ миҫе —
Хисеплесе хур. —

Ентри колхос ҫленӗ,
Ашшӗ претҫетаттӗл.
Ентри илткеленӗ —
Ашшӗ калаҫаҫҫӗ:

„Пилӗк ҫулăх планăн
Икӗ ҫулӗ иртрӗҫ.
Виҫҫӗмӗшне манăн
Хатӗрленме тивӗҫ.

„Тăваттăмӗш пирӗн
Йулашки ҫул пулӗ.
Пилӗк ҫуллăх вирлӗн
Тăваттăра тулӗ“...

Ентри пысăк ҫын пек
Ҫамки тирне пухрӗ.
— Ҫимха, тет вăл, ҫим... — тет,
Сăмсине наш туртрӗ.

— Икӗ ҫулӗ — иккӗ... —
Шăйăрат ун пурӗ.
— Кусем ӗнтӗ иртнӗ...
Тата иккӗш... йурӗ... —

Ҫап-ҫавракa ҫыхвăр
Ентри ҫырса лартрӗ.

— Турăм, Иван Ç .тăрь!..
— Турăм, тетĕн? Латнă... —

Кăвак куçлăх витĕр
Çын пăхса илейрĕ.
Курайман пирки тĕр —
— Лар вырăнна, — терĕ.

Хут те йепле çавăрăр —
Икĕ хут иккĕ тăваттă.
Вĕренекен çамрăк,
Вĕрентекен ватă.

Куçлăхĕ тĕтреллĕ,
Çĕлен çип тăпсиллĕ.
Тепĕр хут тĕллерĕ:
Икĕ хут иккĕ... пиллĕк.

## ЕХМИН ÇАКĂНСАН.

Куратăп:
сĕлтĕшленнĕ Атăл,
тăмлă çыран,
çара йăмра...
Пуçланă йуррăмçăм,
ан татăл,
пăйав,
ан йавăн
мăйăмран!
Ехмин йулташ!
Ес
кам пулсан та
кӳрентеретĕн ĕçӳпе.—
Çырулăхра
пĕр çамрăк тантăш
сӳнсе çухалђĕ
тетĕп еп.
Ахаљ те
çук
сăвăç хисепĕ,
ахаљ те
рифмă таса мар.

есĕ,
епĕ—
ў̆сеттĕмĕр вĕтха,
самай.
Ак —
Уйăп,
çепĕç ђунлă Уйăп.
Вунçиђђĕри йĕкĕт кăна,
çапах ун —
савăт,
ыраш уйĕ
пĕрне пĕри
тăват хăна.
Пера тытсассăнах çак
епĕр
тухасшăн
ђаплă сăвăçа.
„Еп лирĕк"
тетпĕр те —
пĕтетпĕр . . .
Куљттурлăх кирлĕ,
çавă çав.
Вĕренмесен
суха та йывăр,
ăçта унта
сăвă-кĕсле!
Сăвăç пулас тесен —
ан çывăр,
апат ан çи,
анђах — ĕçле!

# КЕЛИ КĔРКУРИНЕ.

Человек — закончен
теççĕ
кунпек ђух:
çын
тăрланнă,
питĕрĕннĕ,
тулса çитнĕ имĕш.
Тулнăи,
тулмани —
урăх ђикме çук,
тупăка
консçервласа
хураймăн итей-çимĕç.
Пархатарсăр вилĕм!
Çăвăçи ес,
тимĕрçи —
çитрĕ те шаккарĕ,
алăк уç та кӳрт.
Шăлна çыртрăн,
сивĕнтĕн
крематтори кимрĕђĕ
йе
кышласа йађĕ
çĕрти ăман-хурт.

Епĕр,
вилĕме куçран пăхса,
ăна лартса
виçсе панă ĕмĕре
тĕрлĕ тăсатпăр хамăршăн:
пĕлĕте тĕпҫетпĕр,
хатĕрлетпĕр саљварссан,
çĕнĕ çĕр тупса-паратпăр,
кăларатпăр аршăн...
Пур талант та
ирĕккĕн
сарăлтăр тесе
тĕнҫере çук револљутси
тапратрăмăр епĕр.
Халиҫҫен
хĕвел çутти ӳкмен
сĕм кĕтессе
к о м у н и с ă м сăмах
çитрĕ
çĕнĕ—ҫăн тĕн—
йевĕр.
Çав
тĕттĕм кĕтессенљи
çутта ăнтăлакан
çынсенҫен
пĕриҫҫĕ есĕ,
Кели Кĕркури.
Çулу
вĕçне тухрĕ санăн.
Анҫах —
тăнлаха —

асăнуллă сăвăра та
епп сана
йури
хăтăрса илесшĕн;
тен
сăлттавĕ те пури.
Ес хăвна
маркçис тейеттĕн,
мана квинтеççентси
ĕçтереттĕн
çирĕм ултташăн...
Йуратха ку...
Анђах ак...
сăра
кăшг
сайрарах ĕçсенђђĕ—
кам пĕлет—
асаймĕђђĕ те и тен
ђаххутку.
Ес
йуласшăн марђђĕ:
сыввипе пĕр тан
тултараттăн куркуна—
шур кăпăк ђĕнтерлентĕр!—
Вара
Атăл хĕррипе
шĕкĕр Шупашкарта,
пролетçыруç мар,
утађђĕ
љумппĕн лĕнђĕр-ленђĕр.

Тиалектĕк
теттĕн ес
анҫах
вăйхална
сапалаттăн
тĕрлĕ кирлĕ-кирлĕ мар ҫĕре:
тишкĕрӳҫĕ перине те
тытрăн аллăна,
Шенкели те,
мусă та
ҫунна кăшт йавăҫрĕ.
Хăш паракрăфа
сана
исторĕк кӳртĕ?
— Йе пурне те,
йе пĕрне те... —
теме ҫукҫкеха,
ма тесессĕн
ыттисем
пăхма пултарĕҫ тӳртĕн:
— Еп те пулнă,
тейĕҫĕ,
еп те хунă хал... —
Хай,
Крылов каларĕш,
мулкаҫне те
пĕр хăлха.
Ҫын ҫынах,
пурне те
пултараймăн ҫав.

Инçе мар,
ак
хамăр ретсенҫех —
Ҫёкеç —
пулҫё сăвăç,
криттĕк,
трамăçă...
Хаљ мĕскер?
— Талантлă ретсенçент.
Кашни
хăйĕн вырăнĕнҫе, тусăм,
валеçетпĕр ĕçхĕле,
хай —
разделение труда:
хăшне
криттĕк туйи,
хăшне —
мусă,
хăшне
тап та кăлар çеç çав
литтераттуртан.
Ес
пуçларăн хăвăнне,
анҫах
пĕтерейме рĕн.
— Никĕсленҫĕ çеçха
çĕнĕ шкулăмăр.
„Утарени правĕлĕнҫен“
Çеçпĕл
йĕрĕнмерĕ,

çаплах
епĕр те
ҫепҫен шăпҫăк çеç пулмăпăр.
Епĕр тухăпăр —
тискуççи,
лекси,
Укăлҫа касси таран
йанкратăпăр сасса.
„Калăп —
тăххрăмĕш ыйту“
текен —
елекçĕ,
ун мимми çитмен калăпланса.
Еп пĕлетĕп:
çиҫĕ сыпăклă
шум р-йахват тавращĕ,
Нарспийе
паротилесе
карҫăкланскерсем —
çав хăр ушкăн —
тепĕр хут
сиксе тăрса тавлашĕ
клаççĕкле сурпанпала
пĕркенҫĕк пĕркенсе.
Ак ăçта
ес кирлĕҫҫĕ, йулташăм,
ак ăçта
ҫĕвен тăрса
мĕн пур пек Лисене

катартасҫӗ —
кив ҫăма
ҫӗнӗ сăра тултарнăшăн
ҫăмӗ тăм пек йепресе
кӗҫҫе пите пӗрӗхнине.
Вашаватсăр вилӗм!
Пӳкле мар,
вăрахăн
сана илсе кайрӗ вăл,
куллен шӗкӗлҫесе.
Пурҫăн хурҫӗ йеверлӗ
(ну йепле пăрахăн?)
ху ҫыхланасса пӗлсех
тăсан
ҫут пӗрҫӗсем.
Ман сӗвемӗм
кунсерен
вăрăмланса пырат ак.
Сассăма ҫăтса
синкерлӗн
хăрăлтатат пыр тӗпӗ.
Мӗн тăвăн —
пусламӗш пур.
Ик ҫул,
виҫ ҫул ыратӗ,
йусаймарăн —
пит те просăн
тӳнсе выртăп еп.
Йе ак
пӗр-пӗр

рифмă шыраса
трамвай айне
кěрсе ўкěп
уттăмпа марша
тěл тунă майăн.
Кам страхланă поэта?
Кам унăн айайне
асăрхатăр?
Çыннăн
хăйěн ěçěсем нумай ун.
Çавăнпа
çак пайанхи
ҫěресěр ҫир-ҫěр урлă
ыранхи çутта
тěллетěп
витěр куççемпе.
Ыранхи
тулли телейшěн
еп
ăçта та йурăллă —
сивě Мурмăни умра
йе шăрăх Тушшампе.
Çук ěлěкхи туртăм
„хамăр йеннелле“,
çук
иккěмěш сыпăк шкул хěрне
хěретнě посă.
Пилěк çуллăх план тăрăх
хама
еп йěнěлеп.

Никам умĕнҫе те
кĕлĕмҫĕленмесĕр,
тунă йăнăшăмсене тунмасăр,
йаланах
еп мухтатăп
санăнне, Октапĕрĕм, —
пĕртен пĕр
парăнми,
улталами питпе хавхаланан
йунпа шўнĕ,
куҫҫуљ витнĕ
хĕрлĕ йалавна.

# ТЁЛЁНМЕЛЛЕ ТЁЛЁК.

Пулат мён,
йулташсем,
тёлёк тени те!
Ăспа-пуçпа та
тавçăран аран.
Пайан
ирпе
куç уçрăм та еп —
питĕ
кулъантăм
Хусантах вăраннăран.
Тĕлĕнмелле тĕлĕк:
таçта
çӳлте пек...
йеропланпа вĕçетпĕр...
ак тĕнђе!
„Хĕрлĕ Ђăваш“
мĕкĕрттерет пек,
епĕ —
сăвă вулатăп имĕш ун çинђе.
Пĕрикĕ сăвăçă,
иквиç калавçă

çушет пухмашкăн
тухнă мĕн епир.
Проппеллĕрсем те
рифмăлăн шавлаççĕ,
сасса та
çăмăллатрĕ пек
ефир.
Йара паратпăр:
ей ес,
рати хумĕ,
етемсене
валеç
кĕввĕмĕре!
Кам халь
пире тăнламĕ,
сума сумĕ —
çав çын
хăлхасăр пулĕ
ĕмĕре.
Çӳлтен пăхатпăр та —
çăмха пек çеç çĕр,
вĕçсе анатпăр та —
хальхи пекех:
Митта Ваçлейĕн
халь те
хурçă крейççĕр,
Елкерĕн те
леш
хурçă карапех.

Йевропалла вĕçтертĕмĕр.
Ак
Анклђи.
Ак Лонтăн.
Ђемперлен кукка
ђейре.
Унтах —
йăвашшăн,
мĕскĕнĕн
(тен анкĕли) —
Иăван Муђи
ларат
пĕр кĕтесре.
— Авани, шур сухал!
Мĕнле ђупатăн? —
„Ытлашши мар, шăллăм,
тĕреклех мар...
Ђемперлене
сутасшăнђђĕ
пĕр... Капкăн,
çавна та
туйанмарĕ,
хыт кукар!“
Керманийе кĕретпĕр.
Кунта пирĕн
паллана çын та
пурђђĕ пек пулас...
— Авани, Алексейĕв!
Хăçан пырăн?

Кĕтсе те супрăмăр вĕт...—
„Вас ис тас?“
— Турах çырлахтăр,
ку тата
мĕн тасĕ,—
пĕлместни есĕ?—
тетĕп йулташа.
Хуплантăмăр,
ара
тăлмаҍ тытаси?
Мĕскер тăвасши?
Ак вĕт тамаша!
Хрансус çĕрĕ.
Париш йусавĕ.
Мотă.
„Мы за Европу,
мы за Эйфели!“
тесе
йантрат
малаллăх кимăнĕ,
отă . . .
— Авани, Шарăв!
Страстăвăй, Кели!
Пăхсам —
йепле илемлĕн
хыпнă шуçăм,
ахаҍ савмарĕ пуҍ ăна Шенни...
Кели мана:
„Интустрианă, тусăм,

фортсон ăйри,
ытти çинҫен —
ни-ни! .."
Пулмаст
Йевроп тăрăх
çунат çапса. —
Пилот!
Çĕн тĕнҫене,
Америке! ..
Ман
Ейфĕл тăрринҫе
сĕрлен сăпса
Вашшинктона анни
сисĕнмерĕ те.
Çĕрле.
Анҫах —
кăнтăрлахи пек —
çутă.
Авттомопил —
кашни çыннах
вуяшар.
Пĕлтерӳсем вулатпăр,
акă ҫутă! —
хăлаç тăршшĕ саспаллипе:
Кушар.
Патне пырса
тинкеререх пăхатпăр:
„Ҫăваш мухтавĕ...
Оççĕппăв...
çенссатси...

çав-çав урампала,
çав-çав театтăр,
çав-çав сехетсенђе...
Атминистратси“.
Çитсе кĕретпĕр.
Лартăмăр пăртакçĕ.
пăхатпăр та —
ђи малтанхи ретре
Лукка Ерхипĕне
Лейман
лараççĕ.
— Сывахи! —
„Сывă.
Ну,
мĕн тетĕр,
е?!
Пророк вĕт епĕр
пайан кун
ђăвашшăн,
Вашшинктонра
шутлатпăр вĕт толлар!
Перлин,
Париш —
веçех
„Кушар“
лартасшăн:
анђах
унта...
пит йӳн, тет, конорар...“

Шăнкрав шăнкăртатат.
Ак
йарăм-йарăм
прошектăр
çутă сапрĕ
ман тĕлех.
Ак
сирĕлет ђаршав...
вăрантăм кайрăм.
Ăнтан кайса выртатăп:
ну тĕлĕ-ĕк!

## ТЕРШАВЁН ПАЛӐКӖ УМӖНҪЕ.

Еп
    памӗтнӗксене
        сава пуҫларӑм,
анҫах
    хама
        ан лартӑр ҫул ҫине:
ман
    ҫухӑн темӑллӑ
        тӳрккес талантӑм
пуйанлатасшӑн ҫеҫ
            пӑртак
                хӑйне.

——

Хусан урамӗсен
    хисепсӗр шавӗн
сасси-ҫӗвви
    ан илтӗнтӗр тесе
пӗлӗтелле
        пӑхса ларать
                Тершавӗн
        кукша пуҫне
            кулак пек
                ҫӗклесе

Вăрттăн сăмах
пуплет пуҫ
турăпа,
тесе
хăйусăр
еп пыратăп хирĕç.
Çӳлтен
иквиçĕ пĕлĕт—шур упа
лӳпперĕн,
пуç таймасăр
шуса иртрĕç.
Каврил Романăвич
кăмăлсăрланчĕ,
çапла каланăн
туйăнчĕ мана:
„Раççей, Раççей!
Таса престолă —
ванчăк...
ех,
хурлăхлă,
ылханлă самана!..“
Йĕри тавра
пăхса
еп çаврăнап.
Илемлĕ мĕн
старикĕн памĕтникĕ.
Куçпа виçеп
кĕпесĕр майрана,
вĕсем пайтах —
те вуннă,
те вуниккĕ.

Хай
    мусă тенисем
        çавсем пуљ терĕм,
çавсем
    шефа илеç мĕн
        поета.
Анђах
    ман
        пĕртте çук вара типтерĕм —
ђутах
    персе йараттăм
        хам йата.
Паллах,
    ман пек
        масасăр сăвăça
вĕсем
    ытлах
        савсах каймаççĕ пулĕ.
„Мушик,
    навус“
        текелĕç...
            Çавă çав —
ђурашăн марђђĕ
        çĕр илемлĕх мулĕ...

# РАМÇИН ПРОФЕССĂРĂН ЙУЛАШКИ ЛЕКСИЙĔ.

Тăвата сехет ытларах
ҫарăнмасăр
каларĕ вăл,
çу пек çуланăн.
Претçетаттĕл
пӳлет:
— ывăнмарăри?
Канăр. —
«Çук,
еп
пилĕкшер сехет
лекси вуланă...»
Пăхатăн —
тăшман
хĕçпăшалсăр саççим,
итлетĕн —
таса пирĕшти,
вашаватлăскер.
Премйер кăнтитаҫĕ,
профессăр Рамçин,
сăрлатăр
ăста
хăвăра есир!

«... Пин çурă шалу.
Акăш-макăш хваттир.
Автто.
Лайăх лапоратори.
Конешнă
пуйасшăн
çунманҗҗĕ епир.
Промпартти вăл
простă —
истори.
Раççей еккономенĕкĕ
җухăн,
наҗар, —
сотсиалисăма
шанмаллах марҗҗĕ.
Çампа —
интервентси,
вăрçă;
пирĕн çар:
тротскисăм,
торкпром,
плҗус —
промпартти.
Анҗах
пур тĕнҗе умĕнҗе
кăшкăрагăп:
йăнăш турăм,
җи айăпли —
епĕ çеç.
Ырлап
кирек йепле прикăвăра та —

сут ирӗкӗ,
сут —
пролеттари ӗҫӗ.
Вилме
хӑрамастӑп.
Мана хаљ хӑрушӑ
ђӗррӗн йулма ҫак ӗҫӗмпе,
пурӑнмашкӑн,
Ҫапах —
пени усӑсӑр.
Ҫӑлнӑ кунҫулшӑн
еп
хатӗр теп
ӗҫҫыннине пулӑшмашкӑн.»
Профессӑр!
Пит тарӑн пҫиххолӑк мӗн есӗр:
вилес те килет,
пурӑнмашкӑн та хатӗр.
Тен
Пуанккаре куккӑра
хӗрхенмесӗр
питлес теместри
кӑшт кӑна? —
Пуҫлӑр атӑр.
О,
есӗр ҫулпуҫӗ вӗг,
есӗр вӗт литӗр,
ҫаптарӑр
тата пӗр
тӑватӑ сехег.

Ан тив
ӑмӑрткайӑкҫӑсем
туйса илҕҕӗр —
йепле ҫурӑлат
айӗнҕи пӗсехе.
Профессӑр!
Пайан
йулашки лекси сирӗн.
Мӗн пысӑккӑш кафӗтӑр
панӑ сире!
Колонлӑ сала —
хӑт штикпе тирсе сирӗл —
хирет те кӗрет ҫын,
кӗрет те хирет.
Ҫенссатси:
сире
кинона та —
ҕ ӗ р р и те,
в и л л и те[1]) —
ӳкерҕӗҫ
пӗр икӗҫӗр меттӑр.
Патшалӑхсем тӑрӑх,
тӗнҕе тӑрӑх иртӗ
ҫаваллӑ шӑм аллӑр,
ҕӗр йунлӑ маншетӑр.
Мӗн пурӗ курса йӑлӑхсассӑн
сире,

[1]) Сасӑсӑр кинона каланӑ.

таса кĕленҫе ăшне
хурĕç те,
хваттир тупса парĕç
çĕнĕ муçейре.
Кĕскен çырĕç:
«Кив тĕнҫе хурҫĕ».

## ÇĔНĔ ÇУЛ ХĂНИСЕМ.

Ĕлĕк-авал,
вунвиçĕ çул кайа,
йе
ытларах та пулĕ
асилсен—
пуçтарăнаҫҫĕçĕ ĕнтĕ
пайан
Ван Ванăҫпа
Тит Титтăҫ
майлисем.
Пуçтарăнаҫҫĕç
ăшă йăвана;
сĕтел çинҫе
çутти,
курка-ҫеркке,
сăмавартан
çăра пăс йавăнат;
пĕтĕм сысна çури,
кăркка—
«Çĕн сул,
йĕрки.
çĕнĕ телей!»—
тута ҫăп-ҫап,

курка шӑк-шак,
ҫеркке
ҫӗн-ҫен ҫӗн-ҫен.
—Ҫуралтӑр
хурт кӗшки пек
аҫапҫа,
тур патӑр
выҫӑх перекетӗнҫен.
Пӗр вӗҫӗ
картара,
тепри
шывра,
ӗни
тулта,
ҫӑвӗ
кӗрекере.
Рахмат
пире пӑхан
пихампара
пӗлтӗр те,
хаҫ те,
ӗмӗр-ӗмӗрех...—
—Ҫӗн ҫул
ҫӗнӗ телей...
Хӑм... латнӑ...
Ҫӗнни мӗн?—
тейӗр.
О,
ҫӗнни вӗҫсӗр;

Ван Ванăҫăн
хăла кĕсри
хăмланă,
Тит Титтăҫăн
сысни ҫурлат
кĕҫĕр.
Ван Ванăҫ
пĕлтĕр
пĕр тапак йуратнă,
кăҫал вăл
тепĕр йышшине
шăршлат.
Тит Титтăҫăн
матки
пĕрер ҫуратнă,
кăҫал—
сасартăк виççĕ,
тупăшлă.
Хуҫа—
йăл-йăл;
тумраҫă—
тĕнкĕл-тенкĕл;
виҫ иппостаҫлĕ
йатлă
кĕҫтина.
Курка тĕпне
пăхăр пус,
кĕмĕл тенкĕ

ҫӗр иртнӗҫем
йантравлӑн
тӑкӑнаť.

* * *

Ҫаплађђӗ
пайан кун
хӑна-вӗрле
хаљ епӗр маннӑ
кивӗ
ҫӗн ҫулта
Ван Ванӑђпа,
Тит Титтӑђпа пӗрле
пур
Руҫ Раҫҫейӗђ
утнӑ ҫав ҫулпа.
Анђах
пӑртӑмӑр епӗр
ун ҫулне.
Хаљ
пин те тӑхӑр ҫӗрсем
мар пире —
вунвиҫҫӗ,
вунтӑвӑттӑсем ҫумне
тӑваттӑ,
пиллӗк
ларт кӑлентаре!
Ҫитес ҫӗнӗ ҫулсем
пур ҫӗрӗпе
пӗр хисепе

кușмашкӑн—
кӑșал епӗр
иккех ҫысла
ҫӑрлатпӑр
хӗрлӗпе:
пӗрремӗш май та
ҫиҫҫӗмӗш нойапӗр.

---

# ЕСИР ХĂШ ЙАЛ—ПĔЛМЕСТĔП, ЕП—ПЕРЕКЕТ КАССИ

Пулаççĕ иккен
етемсем—
каснă лартнă—
хăйĕн туратне
хуçакан
упăте.
Ну калăпăр
сулăм,
налук касси—
латнă—
кусем
сăмахпах
кўртеймес ўкĕте.
Йе ак
конорар тўлен кассă,
страхкассă—
кусем те
сайра
вĕçертес укçана.
Анђах
перекет кассинђен
пăрăнсассăн!—

çук
    еп
        ăнланмастăп вара
            вăл çынна.
Вăл
    ман шухăшпа
        хăвăл ђирлĕ етем тĕр,
мимми
    пуçĕнђен
        тухнă пуљ
            пуç çине.
Ахаљ
    сывă çын
        йеплеха ан ĕнетнĕр
куçумĕн тăран
    перекет уссине?
Пĕр тенкĕ
    хыватăн та—
        тенкĕ те саккăр,
хăйаккăн выртсах
    сакăр пус кĕсйĕне.
— Срука хывсан
    тăхăр прођђăн та
        саплатпăр—
тесе çырнă
    ђлен кĕнекийĕ çине.
Вун тенкĕ хыватăн—
                услам
                    сакăрвуннă.

Вуниккĕ хурсан
ҫут тенке ҫывхармат.
Укҫун хуҫи ху вĕт:
ытах ќирлĕ пулнă—
кĕрен те илетĕн,
никам та ҫармаст.
Ҫерет те ҫук,
ҫук волоккит та-масар та,
каççир хĕр
йăл-йăл çеç кулса
кăмăллат.
Йату
вăрттăнта,
алă пусрăн хăвартăн—
шăнкăрт
шуç çаври
кĕрсе ўкрĕ алла.
Тепри
йунашар кантăкра—
иккех утăм—
пĕр куç хуппинҫех
ҫĕнет сан нумĕрне.
Паратăн.
Тыттарҫĕ укҫа.
Ҫиксе хутăн
Ĕçў те пĕтрĕ,
тух та ут.
Ну, мĕнле?!
Ак калăпăр:
есĕ—хресҫен,
сан хуçалăх.

Тырпулă пуçтартăн—
кĕрхи кĕреке;
йе ывăлă çитĕнҫĕ,
кирлĕ укçа лак.
Кам упрĕха
санăн мулна?
—Перекет.
Йалта
вуткăварсăр
пулмаст халĕ пирĕн,
çуллен
улăм витĕр
хĕлхем пĕрĕхет.
сан сăран йенҫĕкне
Пушар
хĕрхени мĕн?!
Кам сыхлĕха
санăн мулна?
—Перекет.
Етем кăмăлне
тўрлетесшĕн
мĕн ҫухлĕ
пуплетпĕр пулин те,
хаљ хăшпĕр йĕкĕт
вăрлас-çаратас ĕçе
ыр ĕç
тет пулĕ.
Кам сыхлĕха
санăн мулна?
—Перекет.

Ак калăпăр:
ес ĕçлекен,
савăт çынĕ.
Кашни шалуран
пилĕк тенкĕ
хурсан,
çулталăкран илтĕн—
пушмакă та çĕнĕ,
çипуçă та çирĕп,
услам та пур сан.
Ăçта каймастши
пирĕн çав
пилĕк тенкĕ!
Вĕт тăптăрă
урă пуçпа
шутласан—
сăра куркинҫен те,
ҫеркке тĕпĕнҫен те
хăш ҫух
пилĕк тенкĕ ытла
пуçтаран.
Ак калăпăр:
ес—
ҫипҫипер совĕçлевçĕ;
шалу та
шултра сан
хăвна кура;
анҫах
хăш ҫухне
саншăн та килкелеççĕ

кунсем—
çăлтăрсăр каçсенҫен те
хура.
Йе
кварттăл петнĕ вăхăт,
йе
пуçланманхă...
Анҫах
килйышу
(măшăру пушшех)
ăна
пит пĕлесшĕнех мар;
шухăшлан та
паллах—
тупса пулмĕши,
тетĕн,
пĕр шеф?—
Çинех
(пӳлĕх пӳлтĕр!)
хăна-мĕн килети,
пăхан—
пушпушах
йенҫĕкӳ-хутаççу.
Ех,
пултăрҫҫĕ хай
перекетĕн пилеҫĕ!—
кăшăрт
кĕрсе илтĕн те—
хуйхă та çук.

Пĕрех сăмахпа
    каласан—
        кам хăйне хăй
тип шар,
    тип инкек
        тăвас мар тет,
            тата
ĕçхалăх
    патшалăхĕн
        вăйĕ çумне вăй
хушас тет—
    çав çын,
        илтнĕ пул пайантан:
Ытти кассăра
    ес тăран
        йе тăмастăн,
анҫах
    перекет кассине
        çит кĕр те,
санран
    „ес хăш йал çак?"
        тесе ыйтассăн
кала:
    „Перекет кассисем епĕр!"
                    те

## МИКУЛ ТУРАПА КĂМИССАР КУРИЙĔ.

Пайан
    еп—
        поет—
            електритсă малашлĕхĕпе
рати хумĕ çинђе
            йарăнса ишекен,
пайан еп
    йăлтах
        çĕтĕк-çатăк манашкă пек
çитсе
    кĕрсе укрĕм
        „таса“ Ишеке.
Хăрах аллăмра
            ман
        усланкă пек пуçкăшăљ,
тепри—
    ђăмăртанă
        ђукмар пек çурта.
кукша хуралçа
        сывлăх сунтăм та
                    уçнăшăн

уттартăм
çырма хĕрринҫи
пĕр çурта.
Мăкланнă вителĕклĕ,
ку...
мĕн ку—шурă—
пĕтĕм
алăк анĕ
пулса тăрат?
Сухал.
Ватăлса та иккен
Микул турă!—
Çўреха
кун пек сухалпа
Ут та утланаймăн,
тăлă та татаймăн
(лаша вăрри пулнă çветтуй йĕкĕт ҫух).
Иртеççĕ çулсем.
Ватăлатпăр.
Тата мĕн?
Микул муҫи,
теп,
мĕн тата?..
Ответ çук.
Микул муҫи!
Хам ирĕкпе
нихăçан та
йарса пусас çукҫĕ
еп
сан патналла.

Çуртам та ман,
пуçкăшăлĕм те,
аçам та—
пĕр саншăн,
сана куҫҫенеç
памалла.
Микул муҫи,
еп—
кĕрĕшсе килнĕ йевҫĕ.
Вунпилĕк минутсăр
профессăр ҫăваш
мана хушса йаҫĕ,
мана пит витерҫĕ:
—Курсам ăна,—
терĕ
(сана ĕнтĕ снаш).
—Тархасшăн
çитсем Ишеке,—
терĕ,—
пури вăл?
Пурах пулсан
ма
пулăшмаст мана?—терĕ.
Кĕскен:
мана йаҫĕ
Кăмиссар Курийĕ,
капла пĕлмесен—
тепĕр йаҫĕ
Вантер ун.

Сана
    елеклет вăл:
        „Таса Микул турă!
Йашсем,
    стутентсем,
        çул памаççĕ ĕнтĕ.
Апла та еп турăм,
        капла та еп турăм,
тата
    мĕскерле
            тумалла
                манăн?“
                    тет.
Сана
    тархаслат вăл:
        „Маркçисăм тавраш
ӳнерлĕхе
    пит просăлат,
            типĕтет;
çампа
    сан
        хăват туса
            сирмелле марши
çырулăх çинҫен
    çав пустуй кипеке?..
Илемлĕхе
    массă
        туман та,
            тăвас та çук.—

Нушахҫё пулҫ
Рим плепейнё
Ваттиккан!
Ҫаплах
пролеттарийе халё—
кăвас та ҫу,
ҫу та кăвас—
ăнланайатиха?.."
Ҫапла
тарăхат ҫав
сёре ҫўхе тирлё,
шур токă пёркеннё
патритси
Вантер.
Плепей стутентсем
кафётра
урлă-пирлё
пăхаççё те—
шат
аналойлă манер.
Вăл пирён
сăвăç,
тишкёрўçё,
историçё,
вăл пирён
тоҫҫент,
меттотис...—
хăйамат.
Ăна

Ђăвашсен Лувађђарскиĕ

терĕçĕ,
тепле
аккатемĕк тума
хăйайман.
Хăй пек
Ђĕмпĕртен
тĕкленсе тухнă ушкăн
пĕр-пĕр
ахтономлă каçра
йейĕлсен—
„Ак ку
пирĕн Лермăнттăв,
ку—
пирĕн Пушкĕн“
тесе
пĕр-пĕрне
валеçеç клемесем.

„Ђăваш çеминарийĕ,
Ђĕмпĕр литсейĕ,
унта
револ̆утси те
тунă епир.
Унта
епĕр
сирĕн пек
лĕпĕртетсеи!—
ним
ЂАППсăрах

ђаплă
çуралђĕ Нарспи".
Пĕр-пĕр Уйăпа
хĕпхĕрлĕ
хĕрес тăват те,
ађаш „Арçури"
çеммипе савăшат.
Пуçларĕç вара
пукварпе хрестоматти
Парнас тӳпине
хăпартма сăвăçа.
Тĕрлĕ
Йаркуњи,
Ванеркки—
кусем
хатĕр,
кусем
„рат старатсă"--
тенке ан шелле.
Халкомĕсем
хамрăн,
çутпайĕсем
хамăр,—
пĕрик Тимуххa
алпусат те
Елле.
Çӳлтен
тӳрепе шараран
тапратаççĕ те,
партта лариђђенех
укса шерепи.

Сухаллă
    ҫёр турăш,
        пукварçĕсен класçĕкĕ—
мĕнпур
    „Çутталла-Сукмакра"
                Шелепи.
Микул муçи!
            Есĕ
        шуралнă пулсан та
унтан ирттерен,
    ес хăт
        тĕттĕм йалта.
Ăна—
    Шелепи Микулне—
        çут Хусан та,
Çĕмпĕр те
    çĕртеймĕ хаç
        алхапăлтах.
Вилмен вăл.
    Анçах
        вĕт капла
            çĕр хут намăс:
пуçа пушатса
    тултарха хырăма...
Çăкăр çĕртме
            пурте ăста,
                çăкăртан ес
пĕл
    ухă пек рифмă хывса
                хăйрама.

Çӳпçин
хупăлҕи тупăнат,
теççĕ мари?--
Мĕн пур
çав çара кĕлĕмçе
шăннă ҕух
словар çулçипе
хупăрлат
ват Ашмарĕн;
словари,
йеванкĕли вăл—
пĕлме çук...
Микул муҕи!
Есĕ
илместĕн хăт пенççи,
сана
тӳлемеç
конорар йĕркерен,
уксах-суккăрсем те
халҕ
пит çӳремеççĕ,—
пĕрех сăмахпа:
ес
сийенсĕртерех.
Ме
санăн ырхан мăйна
çак ҕеҕеке хăт,
кĕрсе вырăнаç,
çурта çут та
кĕлту...

—Сана
    еп
        малтан
            ху вантерҫĕ
                тесе вĕт...—
тăхлан куҫсене
    мăҙлаттарҙĕ ҫветтуй.
Пулман та,
    пулас та ҫук.
        Еп
            йевитлетĕп:
мĕн пур
    хĕрлĕ-шурă халттурҫă,
                    мĕн пур
принҙҙипсĕр,
        халуй,
        потхалим,
            сив еклектĕк—
сан
    тĕшмĕшӳнтен те
        хăрушă
            ҫав мур...
Лăпланҙĕ старик.
            Кĕрсе кайрĕ.
                    Ăна мĕн!—
ун
    хăйĕн
        „принҙҙипĕсем“
            пур Ишекре.

Поеçи çинђен
вăл
халђ тин ăнланаймĕ.
истори тесен...
хăй истори пекрех.
Ларат
ун пăрахăç,
тăлăх ђавссанайĕ
тахçан арĕслене
ханша лаççи пек.
Пăрахрăм та
утрăм.
Çыртмап ђавсана еп—
хăт
шик шăхăрђђĕр,
хăт
тăсђĕр:
„спаççипех“.

# ПАЙАНХИ ПОЕМĂ.

Ђăваш автономийĕн 10 çул хушшинђи ӳсĕмĕсемпе тӳсĕмĕсене пĕтĕçтерсе çырнă кĕске реçуме.

## УМСĂМАХ.

Праçник те мар,
уйав та мар —
çăва тĕпне
шăпђăк йе росă! —
Çук,
урăх сасă
йан та йан:
çĕршывăмри
çĕнĕ тымар,
куллен кунхи
тĕреклĕ просă
туртат ман ђунăма пайан.
Ак
епĕр —
ђикĕсĕр-виçесĕр,
тăманпала
тусан айне
пулса выртан патшалăхра —

ак
епĕр хаҫ
йепле виҫетпĕр
тĕнҫенĕн улттăмĕш пайне,
йепле виҫетпĕр
хамăра!
Ĕнер
ҫак
ҫăпҫăмăр ҫĕре
пĕтĕм Йевроп мăшкăлĕшĕн
китсем ҫине лартакансем —
пĕртен-пĕр ушкăн
тĕнҫере
хăй ирĕклĕ ĕҫне
мĕншĕн
ĕҫленине
пĕлен етем.

* * *

Калаҫҫĕр:
поеҫи хунарĕ
сӳнсе мăшкăлланҫĕ, —
теҫҫĕр;
пуҫлантăр
„аха" та
„епей".
Куратри —
ҫĕршыв пролеттари,
перасăр,
вĕҫкĕн рифмăҫемсĕр,

тăват
ĕмĕрлĕх
еппоппей.
Калаҫҫĕр:
ҫеҫеклĕ ҫараншăн
пенҫин килĕшӳсĕр, —
теҫҫĕр;
хуплаҫҫĕр
сăмси шăтăкне.
Ҫапах
ҫĕнтерӳллĕ ыраншăн
пайан
епĕр
ним хĕрхенмесĕр
таптатпăр
ҫаран ҫеҫекне.

* * *

Турккестан ҫеҫенхирĕн
кăлканĕ
тӳнсе йулҫĕ
шпалсем айне,
Ҫĕпĕр йывăҫĕ
пулҫĕ шпал.
Кăркăса
вăрман пурлăхĕ
анĕ,
ҫалтун
ҫийĕ
кăркăс какайне —

çакнашкал
ун пайти,
çакнашкал.
Ак
ҫасах
хăйăрлă хирсенҫе
йешеркке хуласем
ўссе ларĕç,
ўссе ларĕç
ҫеҫек пахҫисем;
хай
пенçин шăрши
пулĕ инçе.
Унта
ҫыс хăни çеç
пулса мар ес,
кирпĕçне те
кĕрсе çĕклесем!

1.

Вăтам
Сойус картти çинҫе
пĕр
пысăкрах пуçпўрнепе
пуссассăн
ман республĕке —
республĕкĕм
пытанĕҫҫĕ.
Пытанĕҫҫĕ
республĕкĕм,

ҫикки те куранми
ҫăвашăн.
Ҫапах
ман
пайанхи кĕввĕм
тăван ĕҫхалăхшăн
йантрасшăн.
Сăвăҫ та,
йурăҫă та мар,—
кĕслем-сăрнайăм
хыҫа йулҫĕ.
Ҫук,
урăх йатшăн
тăрăшар:
сотсиалисăм пăртуккулҫĕ.

* * *

— Автономи?
Ҫăнахи?..
Ну-у?!
Анҫах
мĕне вăл
ҫăваша?
Историйĕ
ҫаранна ун,
вăл
халҫ вĕт
пиҫеври лаша.
Хăҫан
пиҫев лаши
тĕпе

йурттарни пур
хӑй ҫулӗпе?
Паллах —
пӗҫӗк аҫа ваййи,
ак
вылӗҫ-вылӗҫ те —
лӑпланӗҫ.
Раҫҫей!
Миҫе патша вӑйӗ!
Ес
шӳт тетни,
Васҫили Ванӑҫ?.. —
— Ӑм-та...
Вопҫе
ҫӑвашсене
шансах пӗтерейместӗп епӗ.
Селиванпа
Йехрем ҫине
тӗренҫӗ
пурӑнӑҫ хисепӗ. —
— Конешнӑ:
мул та
ырӑ тон,
ҫине-пусҫна
кӑшт тирпейле;
вара
Йевроп тӑрӑх —
партон! —
кустар
йеврей ҫӗрипеле... —

„Вопҫе
ку револҫутсирен
ҫăваш
кураймĕ пархатар.
Çитменнине —
çак
çук çĕртен
атминистатси тăрантар..."
. . . . . . . . . . . . . .
Çапла
сăмахлама пултарнă
пĕрикĕ
руссоман
ессер.
Çапах та
Оплăç
ҫăмăртаннă,
Вăл
кирлĕ пулнă.
Çитнĕ çĕр.

2.

Фетератси тавра —
плоккатă;
шалта —
выçлăх,
пыйтă,
ҫир...
Анҫах
нихăш фронтран та,
нихçан та

çĕнтермесĕр
тухман епир.
Фетератси тавра
йун кӳленнĕ;
шалта —
„йут ăрусен“
çыннисем
çăлăнăç йалавне
çĕкленĕ.
— Танлăх!
— Ирĕклĕх!! —
тенĕ вĕсем.
Пур
хĕнхурлă,
пур
пусмăрлă халăх —
хăй асапĕсене
ылханса —
пĕр çăлтăр айĕнҗе,
пĕр каварлă,
пĕр çын пек
панă
çак сасса.

* * *

Çамрăк Оплăç.
Нумай
йĕре-кулă.
Халиҗҗен
влаç тытман
алура.

Автономи хыпарĕ
хир урлă,
йал-йал урлă
вĕçет
çĕршывра:
Ђăвашсен
патша пур
темеççи?"
—Пур, тет;
пур, тет.—
„Ăçташи?
Пĕлесђĕ.
—Ђăваш пулĕ те,
темле çын...—
„Тимухха ерхерей,
текелеççĕ..."
Хĕсĕк куçлă,
ђейе стариксем
ђĕлĕме
пак та пак
тутараççĕ.
Хыпар хыççăн
хыпар тирсе
халлапсем,
йумахсем
йуптараççĕ.
Анђах—
ним ерхерейсĕр,
патшасăр—

ӗмӗрне
асра ҫук
„Ҫӑваш Влаҫӗ“
йалсене сисӗнсен,
вӑтанмасӑр
сенӗксем,
тӑпаҫсем
йӑтаҫҫӗ.
Ҫӗрӗ йулнӑ
патша йыттисем,
хуҫасен йевҫисем
йӗкӗлтеҫҫӗ:
— Ҫӑваш халӑхӗн
ҫук сийсем,
пӗтӗмпех
хура халӑх вӑл, —
теҫҫӗ.
— Ҫӑваш халӑхӗн
ҫук пролеттари,
вӑл
хуҫа пулаймаст
хӑй ҫӗрне.
Автономи
ӑна
мӗн парӗ?..—
хӗтӗртеҫҫӗ
Ҫаппан вӑрҫине.
Ҫамрӑк Оплӑҫ.
Нумай
йӗре-кулӑ.

Влаç тытма
верёнмен
алура.
Анҫах
клас шăнăрĕ —
çирĕп,
хулăн;
ӳсет
Оплăç
хăйне кура.

3.

Сотсиалисăмлă
Совет
Респуплĕкĕсен
Мăн Сойусĕ.
Тĕрекленет çĕршыв,
ӳсет,
татах та
тĕрекленĕ,
ӳсĕ.
Оплăçăм —
Респуплĕк,
Аслă Ҫăвашлăх
(тупаç сăмахне те мур!)
— Ҫĕмпĕр
йе Улатăр?
— Улатăр,
тавлашмăп,
унта
тапак хапрăкĕ пур".

Пуçланҫĕ вара
тĕрлĕ мыскара:
— Ҫи-ҫи кăсăйа,
ăçта кайан, кăсăйа?..
Ие
таппу хуçăлсан? —
„Улатăра кайап,
сыптарап саман...“
Анҫах
лере
кулак мăкшă
хăйĕннех
перет:
— Ак
мăшкăл,
мăшкăл!..
— Тĕттĕм
çуттĕнҫе,
суртăр,
суртăр
ман пите.
Ҫăваш куçĕнҫен
пăхса пурăнăпи? —
тет.
Пĕлмерĕç пулас
мăкшăсем,
Ăнланмарĕç
ак çакна:
хăй
ҫура пулса
курнă етем

нихăçан
ҫура тумĕ
çынна.

* * *

Ҫикке саран
ҫăваш çынни
патшалăхри
патшалăх мар,
вăл —
аслă штатсенҫи
пĕр штат.
Улатăр хулинҫе
акни
(мĕскер çак уншăн пăшăхма?)
Шупашкартах
аван шăтат.
Респуплĕк,
оплăç,
кĕпĕрне —
йатраим
халлăх курăнҫĕ?
Çук,
епĕр
урăхпа хастар,
епир
калатпăр пĕрпĕрне:
Сотсиалисăм хорĕнҫе
пăрахăç сасă пулас мар!

4.

Пуçланать
пултарулăх
ĕмĕр-ĕмĕр
пулмана.
Уйхир,
йешĕл улăх
хурçă-тимĕр тумланать.

. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

— Ĕçхĕл
нумай,
вĕренме те
вăхăт çук.
Çапах,
кукамай,
вĕрентемха
пушă ҍух:
Ак ку
çурла пекки
С пулать,
ан ман.
Шушкă пек
çавраки
О
пулаť,
ăнлан.

Йёкёрункă,
пёр патак
**В**
пулаť,
кукамай.
Ак ку
виç йупли тата
**Е**
пулаť
капла май.
Кёрепле пекки
ак ку
**Т**
пулаť.
Ан ман,
асту.
Вуласа кăтартха, —
тет.
Кукамай вулаť:
С —
О...
В –
Е —
Т.

* * *

Шăранаť
пултарулăх,
çăрхăнаť
тар-шур.

Шупашкар —
тăмлă-пурлă,
хĕпхĕрлĕ,
шапшур.
Хăпараççĕ
ђул çуртсем
виçтăвата хут та.
Ӳс,
респуплĕкĕм,
ӳссем,
ес ӳссен
еп тутă.
Ђăмăртанђĕ
кăмпинат —
пролеттари ӳсĕ,
ђукун çулĕ хывăнат̆ —
тавар хакĕ
ӳкĕ.
— Ăйăр çүна! —
тет
ват карђăкки.
Ламппи
çунат̆,
Илйиђ ламппăђки.
Пăрки
пăрăнат̆
тăрă шыв
парасшăн.
Хытăрах
пăр ăна,

ан пăтрат
ăссэссăн!

5.

«Историсĕр»
халăх
истори тăват,
хăйĕн кунçулне
тирпейлет.
Пытанӑăк аваллăх,
хаваслă малаллăх —
тухат,
хăпарат
çийеле.
Апаш тăприсем
сирĕлсе çĕкленеççĕ.
Ĕнер
хура пӳрт тĕтĕмне
çăтакан
пайан —
çивӑĕ кусlă,
тăнлă кĕнекеçĕ,
çыруçă,
ӑĕлхеçĕ,
сăнавçă... —
такам.
Ашмарĕнĕ,
Смолĕнĕ,
Марĕ

туртӑнаççӗ
респуплӗкӗме
— Йахват, —
тет пӗри.
— Пӑлхари,
шумер, —
тет тепри
темме.
Тавлашмӑпӑр,
тен
ђӑвашах тӑр,
апла та
епир
нађар мар.
Йалан
киввине
ан пуççапӑр:
çӗннине
пултаратӑр, ђарма.
Çӗнни —
пайанхи,
лӑш курмасӑр,
çывӑрмасӑр
ӗçлен ӗççынни.
Тинехпи,
йе ытти —
хӑт томсем урлӑ каçӑр —
анђах
пултӑр
истори çӗннин!

6.

Иртнӗ кунӑн
ҫӑршавӗ
уҫӑлса хупӑнҫӗ.
Ӗмӗртен ӗмӗрхи
хура ҫӗр хурҫӗ
пур етемлӗх,
тӗнҫе
умӗнҫе
хӑй сӑнне
хӗрелмесӗр
курҫӗ.
Екран
ҫинҫе
Сарпике
утать.
Пӗвӗ
ҫинҫе,
ҫӳпҫӳхе
тута.
Таҫта,
ҫикӗ урлӑ
йут патшалӑхра
епӗр пурӗ
халь
шав сисӗнет.
Пире,
епӗр тӑкнӑ
тара-шура,

пире —
каскӑн
Атӑл пӑлхавҫисене —
шурӑ пир ҫинҫе курса,
акӑлҫанӗ,
франтсусӗ,
нимӗҫӗ
кӗрешӳ кунӗнҫе
асилӗҫӗ
патриот кӑмӑлне
ҫакарса.

* * *

«Шупашкар
туйи
шурӑ
туйа...»
Итле те
«Аппайккӑ» кур.
Ӳсет
ман ҫӗршывӑм,
пуйат —
йурри те,
карттинӗ те
пур.
Ҫапҫамрӑк
хӗрсем
арттис та
йурӑҫӑ.
Выҫаҫҫӗ
хӗрсе,

йурлаççĕ...
турăçăм!
— Кай,
кай Ивана,
ма каймастăн
Ивана?
Унтан лайăх каҕҕă
урăх
есĕ тупаймастăн... —
Çыр,
çыр, Ваçанкка,
ма çырмаçтăн
сăввуна?
Кив кĕвĕрен
çĕнĕ йурă
есĕ
тăваймастăн.
Аҭа,
пуçлар.
«Айтар»
«Кушар».
Мăнтарăн
«Траххом йурри» —
Тухтăр Оççĕппăв йĕрри.

* * *

Калатăп кăна,
йатлаçмăп,
çапах:
„хĕрĕме калатăп,

кинĕм,
итле!»
Искуствă çинчен
пĕрре мар
калаçнă —
ним пытармасăр,
пат тӳрĕ,
польшшевикле.
Пурте
çылăхлă епĕр,
пурте;
анчах
кам,
ӳкĕнсе,
чăнчăнах
хăйне
парттин
хура ĕçне кӳртĕ —
çавна
манмĕ,
каçарĕ самана.

7.

Çĕршывăмăн
поеçи пур —
чĕрри те,
хут çинчи те.
Пурне те
хускатаймăпăр,

пире
пĕри те
çитĕ.
Ăслă çынсен
каларĕшпе
Ђĕмпĕр иккен
ун амăш.
Çанталăк пулнă,
тет,
йĕпе,
халђ
уйартса,
паллах уш.
Ӳсет респуплĕкĕм
куллен,
поеçи те
ӳсет
ђĕр пурнăç йухăмне
хуллен
хут хӳмĕпе хӳсе.
„Çиллапĕк“
„тонĕк“
теттĕмĕр
(хуппи вĕт ухмаха).
Тавлашрăмăр,
çĕнтертĕмĕр,
халђ
иккĕш те
паха.

Нарспийĕ те,
Сетнерĕ те —
пит çывăх тантăшсем.
Хуппийĕ
сисĕнмерĕ те
тулли
ђăмăр тĕшсен.
Çапах та —
аслă çилтăвăл
çиллапĕкпе килмен.
Çампа
ĕнтĕ
çырлахрĕ вăл,
ӳсеймĕ ӳлĕмрен.
Томсем
çурадайман та ха,
хунат
мур кĕнеке...
Ăнланăр та
ан антăхăр:
малашлĕх
тонĕке!

8.

Çанталăк —
ђун хăрамалла:
кĕрхи
пĕр нӳрлĕ,
салху каç.

Пӗлӗт —
пеççимислах
тӗксӗм...
Кунпек ђухне
урамалла
вӑрӑсем çеç
сӗнксе тухаç,
тата
хваттирсӗр поетсем.
Утатӑп
Атӑл хӗррипе.
Курман та —
мана хирӗçех
пӗр
вӑрӑмскер,
типери пек,
анат̆
хӑйаккӑн вирхӗнсе.
Пӑлтӑртатат̆
арки-çанни...
Палларӑм.
Тӗлӗнтӗм.
Ђӗнеп:
— Авани,
Шупуççынни?
Раххат
йаш тонӗкçӗсене!.. —
Шупуççынни
хӗрхӳн кулат̆:

„Миххал Петровĕҫ
ырламасҭ...
Ку —
вырăс культтурне пула,
ҫăвашшăн —
ҫиҫĕ сыпăк
маç...
ак
курăнĕ
хăшĕ ҫăнни..."
. . . . . . . . . . . . . .
Йĕрĕннĕн
пĕрĕнет тута.
. . . . . . . . . . . . . .
Йĕри тавра
Шупуссыннин
пылак чтиллийĕ
путаҭ. —
Хула çинҫен
вĕри çĕлен
иртмерĕ
ҫашкăрса
çав каç.
Електăр куçĕсемпелен
çуртсем
йăлтăртатса ларас.
Сившу çынни
йапшăр Урха
анмарĕ
Атăл хĕррине,

тыттараймарӗ
сар курка
хӑйӗн
ҫепҫен такмакҫине.
Ҫипер Пике,
Хитре Ҫӗкеҫ
тӗшмӗшленмеҫҫӗ йалсенҫе;
вӗсем
траххом ҫирне хӗртеҫ,
вӗсем
рапфак сакки ҫинҫе.
Тухатмӑшсем,
сӗтлӗ кӳлсем
хӑтараймарӗҫ ҫӑваша. —
Фортсон лашисене
кӳлсе
ҫанталӑкпа
вӑл тавлашат.

9.

Саланат
ҫӗрӗк йӑла:
трактӑр кассипе пӗрле
ҫӗнӗ сӑн
кӗрет йала,
ҫӗнӗ вӑйӑ
кӗр кӗрлет.
Ҫиркӳ мар,
хаҫ клуп.
Кӗлтума

çук пуп.
Хĕрлĕ майлă
пионер —
мĕн пур аҕана
пример.
Çăмăл утлă çарĕ
комсомолĕс мари? —
Пӳрократ,
хăйамат —
ҕас кăтарт,
саламат!
Сов
йе
комухмахсене
ҕасрах
тăрă шыв çине!
«Апла тусан та йурат,
Капла тусан та йурат...»
Çакăн пек
„аслă“
йурра
ҕитлĕхлесен те йурат.
Иртерехха,
иртерех
кăмака çине ухса,
кăвапа çине пăхса
савăнса ларма пире.
Ĕçсем
нумай,

прикатă хыççăн
 прикатă.
Вăл май,
 ку май,
анҫах —
 пĕр шăнăр
 хăт ăçта та.

* * *

Нумай
 ан йупилейлĕр,
ан мухтăр
 хăвăра. —
«Хĕрлĕ ҫăваш»
 проппеллĕрĕ
кĕрлетĕр хытăрах!
Виçеллĕ кăшкăрар,
тĕллевлĕрех сăмах. —
Канаш — Шупашкара
хывасҫĕ хăвăртрах.
Сайралтăр ҫирккуҫар.
Çӳхелҫҫĕр отҫотсем! —
Çав аслă
 пĕр шкула
уçасҫĕ
 хал çитсен...

* * *

Ман çĕршывăн ӳсĕмĕ —
пур патшалăх тӳсĕмĕ,

пур патшалăх ӳсĕмĕ —
ман çĕршывăн тӳсĕмĕ;
Мускавра
мĕн акăнĕ —
Шупашкарта
ӳсĕнĕ.
Уйрăлми
йĕкĕреш пек
пурăнатпăр епĕр.
Пĕрлешсе
кĕрешнĕ,
пĕрлешсе
ĕçлетпĕр.
Пурте
пĕр аçан епĕр,
пурте
пĕр аман.
Тăванллă Октапĕр
пурне те
тăван.
Пурсăмăр та
меллĕн
тытрăмăр
пĕр ĕç.
Пуçăмăрта —
Ленĕн,
ђĕрере —
Илйиђ,

Пурте
        пĕр етем пек
епĕр
        тупа тунă:
йурттăр
        пурнăç темпĕ!
Ђарăну —
        Комунă.

## ИШШАК ВЕРТИ.

«... Хěвел çўлтеха,
Çутă пур.
Хěрўлě пирěн вуттăмăр...
Те савăнăç,
Те пысăк хур
Курма епир тěлпултăмăр?..

Ăçтан килни,
Ăçта кайни
Мана сан кирлě мар питех.
Мěн тěпђени,
Мěн шырани —
Çакна пěлсессěн те çитет.

Еувве, йěкěт.
Еп йулташла
Çакна пěлтерěп хам çинђен ...
(Пăрахха ес кăранташна,
Итле пăлав ěлкěриђђен).

. . . Наухханa арăкěнђен
Тăватă тавлăк уттинђе
Нумай пулмаст пěр пит ђеђен
Аул ларађђě сăрт çинђе.

Ун йађě Сууксу-Тăпа.
Вунсакăр кипитке тěркмен

Текке хăварнă йăлапа
Пурнатъёç лăпкăн,
Йерипен.

Атте ман — Мирсеит-Рахман —
Тăватă арăмпа тăрса,
Тăваттăшне те пăрахма
Шут тунă пулнă тарăхса.

Мĕншĕн тетни?
Мĕншĕн тесен —
Кĕтӳ аҫа-пăҫа çинҫе
Пĕр ывăл та пулман вĕсен
Мана туса ĕлкĕртиҫҫен.

Каçсеренех мĕскĕн атте
Çĕрле, кипиткерен тухса,
Кĕлтунă, —
Ывăл ыйтнă тет
Таса Мекке йенне пăхса.

Вара еп курнă çуттĕнҫе.
Анне мана çуратсанах
Ашак кĕçеннĕ картинҫе;
Çампа ҫи малтанхи сăмах —
Телей кӳрети вăл,
Терти —
«Ишшак» килсе кĕрет пуçа,
Çампа кĕскен Ишшак Верти
Тесе ҫĕннĕ ман пурнăçа.

Еувве, йĕкĕт:
Ишшак Верти
Пулат ман йатăм,

Хам тёркмен.
Аттен пёртен-пёр ывăлĕ
Пурнаттăм лăпкăн,
йерипен.

Анђах ăслă çынсем мана
Тимлеђђĕç пит хивре ĕçе.
— Ак килĕ ахăрсамана,
Çĕр те ђĕтренĕ, — теђђĕçĕ.

Мана калађђĕçĕ:
« Ан ман —
Сана çав самана ђĕнĕ.
Тĕлĕнмелле ăрăмпалан
Çуралтăн есĕ тĕнђене.

« Ăшранах сылтăм ђышкуна
Ђăмăртаса тухсаттăн ес.
Мĕне пĕлтерĕ ку?“
Çакна
Нумайĕш тăрăшрĕç пĕлме.

«Тĕрлĕ пулат паллийĕ ун.
Пăхаççĕ:
Ывăç тĕпĕнђе
Пĕвер пек кĕвĕлнĕ ђĕр йун...
Пĕтĕм аул йалт тĕлĕнђĕ.

« Мĕн пур асамăç-йумăçă
Пуçтарăнђĕç сана курма.
— Тем ђухлĕ йун тăкĕ çак çын,
Вăл çуралса хаси пулма . . .

— Хăй Ђăнкăсхан çапла йунпа
Çуралнă, —

Терĕç етемсем.
Мухтавлă пурнăç,
Çут йупа
Хăварҫĕçĕ сана сĕнсе...»

Çапла калаҫҫĕçĕ мана.
— Хаси пул, —
Теҫҫĕç,
Тыт хĕçе!
Ак килĕ ахăрсамана,
Çĕр те ҫĕтренĕ... —
Теҫҫĕçĕ.

Пĕлместĕп:
Ахăрсаманаи,
Йе урăхла пулҫи ун йаҫĕ,
Анҫах пĕрре —
Калам сана еп —.
Ҫăнах темскер кĕрлесе анҫĕ.

Пĕлместĕп:
Ҫăн ҫĕтрени тен çĕр, —
Вăл пĕр тĕве курпунĕ мар вĕт.
Анҫах Наухана
(Мĕншĕн тĕр?)
Хăй çыранне хăй татса кайрĕ.

Ăрамасан таврашĕҫҫĕ,
Куран вăрçма хушмаст çав уйăх.
Анҫах ман халăх кăшкăрҫĕ:
— Хасавата!!! —
Пырса ан çулăх...

Калана́:
«Ва́ха́т ҫитĕ, тенĕ, —
Тусем хускалĕҫ выра́нҌен,
Сив тинĕс па́с пулса ҫĕкленĕ,
А́шши — па́р пулĕ...»
Тенĕ.
Ҍа́н.
Ҍа́нах та ҫутҫанталăк халĕ
Ҫав майла́ ҫавра́нҌĕи тен.
А́рамасан Ҍухне ахаљи
Ма́сса́љмана ха́ваҫ килтен...

Еп те ҫĕклерĕм йаттакан.
Аула́мпа сывпуллашап.
Тухса вĕҫтертĕм аттака.
Синкерĕн тулха́рат лашам...
Вĕҫĕ-хĕррисĕр йуланут:
Хĕҫе хĕҫ,
А́ма́ра а́ма́р...
Лашу ӳксессĕн ҫуран ут,
Калла Ҍакма ан аса́на́р.

— Хасаватра вилекене
«Ва́л ҫук ĕнтĕ»
Тесе ан кала́р:
Ун Ҍунĕ тура́па пĕрле,
Ун ĕмĕрлĕх ҫĕршывĕ капа́р... —

Ҫапла хавхалатат пире
Ҫар пуҫла́хĕ Енвер Пашша...
Еп тĕкĕнмен те Ҍĕлпĕре, —
Та́п Ҍара́нҌĕ айри лаша.

Ҫасрах сикеп йĕнер ҫинҫен.
Лашам, пуҫне силлерĕ те,
Еп тепĕр ут утланиҫҫен
Вырта парат, мĕскĕн, ҫĕрте.

Хуса пĕҫернĕ хăмăр йун
Сăрларĕ типĕ хăйăра.
Тепре ҫĕтрет те ăмри ун
Выртса йулат шăрăх уйра.

Еп тепĕр хут асса кайап:
— Ман хыҫҫăн, Сууксу-Тăпа! —
Тесе, мĕн пур ҫăрсăр вăйа
Пухса, вĕҫеп ҫĕн утăмпа.

Енвер Пашша ҫакна сăнарĕ,
Ал сулҫĕ ҫывăх сыннине:
— Ак ҫак сана мăссăљман мари?!
Тесе кăтартрĕ ман йенне.
Еувве, йĕкĕт,
Ҫапла кăтартрĕ.
Анҫах унҫҫен те пулаймаст —
Тăшманăн ҫарĕнҫен пĕри
Ман ут пуҫне йарса тытат те,
Ҫиленнĕ, хайарланнă сас...
Пăхатăп: хам кукка Керим!

Мĕскершĕн ҫапăҫатăн? — тет, —
Хаси пулас килҫим тата?
Кама хайар сунатăн?! — тет...
Хам та пĕлместĕп,
Тупата.

Пире калана:
Хасават,

Кĕфĕрсене турамалла...
Çăлтăр тăхăннă Асхапат,
Унта çур уйăх лартмалла...

Пăхатăп та —
Керимăн та
Калпак çинҫе хĕрлĕ çăлтăр.
Пăхатăп та —
Лере, малта
Вĕçсĕр тĕркмен мĕн,
Çĕрçăттăр!

Тăратпăр икĕ мăссăљман —
Хĕçе хĕç,
Ăмăра ăмăр.
Ик хурăнташ,
Тĕпрен тăван,
Тăшман пулса тĕл пултăмăр!

— Пасмаҫ! —
Тет хай кукка мана. —
Аçу сухаллине ан кур,
Мăшру сан пултăр тивана,
Аҫа ан тутăр! . . — тет.
Мĕн пур
Ылханпала ылханҫĕ те,
Çиллес çунан сăнсăпатне
Хăрахайаккăн пăрҫĕ те,
Кустарҫĕ хĕрлисем патне.

Еувве, йĕкĕт,
Хĕрлĕ хескер

Пулса кукка ман,
Хам — пасмаҫ...

Вăрçă та пĕтрĕ хайхискер,
Çеçен хирсем те лăпланаç.

Еп таврăнап аулăма
Анҫах ман Сууксу-Тăпа
Йăлтах пăрахнă пурăнма
Текке хăварнă йăлапа.

Аттен пĕртен-пĕр ывăлҫ еп
Шыратăп килĕм-çуртăма.
Пăхатăп та
Йăлт тĕлĕнеп:
Аулăмра çук çуртăм ман!..

Çапла пулса иккен ĕçсем:
Енвер Пашша çĕнтереймен,
Хаси йалавĕпе вĕçсе
Ытла нумай та çўреймен.

Таçта лере,
Мускав йенҫе
Çĕнĕ хаси çуралнă мĕн.
Çавна итленĕ мĕн тĕнҫе,
Çав паттăрăн йалавĕшĕн
Пире аулсенҫен йăлтах,
Килçуртсене кăмрăк туса, —
Пасмаҫ,
Ултавçă,
Вăрхурах, —
Тесе кăларнă мĕн хуса.

Çав паттăр пит инçе тăнă;
Çапах,
Вăл сасă парсанах,
Мĕн пурĕ пăхăннă ăна,
Çунатлă пулнă ун сăмах.
— Тĕнҗе нихçан та паттăртан
Тулман, —
Тет ăслă калаçу.
Анҗах çав паттăрпа пĕр тан
Хаљҗҗен пулман,
Пулас та çук.

Çынсем ăна хисеплесе
Нумайĕшĕ
«Папай, пиҗҗе, —
Ленни Оклы-Темир» тесе
Җĕнеççĕ·имĕш çĕр çинҗе...»

## СОНА.

Вĕсем тăваттăн ҫарăнҫĕç:
Иоççĕх Нил — имшер йеврей,
Оленĕн — вырăс,
Хай — меттис,
Йертсе пыран лоппар — Морей.

Йĕри тавра шапшурă йур,
Пăхсан куçа шартса йарат.
Сивве пĕлем тесессĕн —
Сур,
Сăмса шăнкар,
Пĕлĕн вара.

Пайан ирпе ҫипҫиперех
Шăнса шартлатрĕ кратăснĕк.
Пайан ирпе пĕтрĕ ерех,
Йытсем те наҫарланҫĕçĕ.

Йытсем те ырханланҫĕç те,
Апат та сахалланҫĕ тĕр, —
Конççервă, аш пĕтнĕ ĕнтĕ...
Анҫах инçеха Çĕнĕ Çĕр.

Калла кайма тата инçе:
Çурма çултан иртсе вĕсем...

Çапла çара хир варринҫе
Канма тăҫĕç тăват етем.

* * *

Пĕлĕт çинҫе иквиç хĕвел
Йупа пек тăсăлса тăраççĕ.
Анҫах ăшă памаççĕ,
Шел,
Хăрушă çугçанталăк влаçĕ!

Ҫĕресĕр,
Хĕрхенӳсĕр сивĕ,
Никам хутне кĕми шăн-пăр.
Çитмен ĕмĕт,
Ылхав çĕршывĕ,
Нихçан та татăлми сăнҫăр.

Пĕр шурă йур,
Пĕр вилĕ кĕрт —
Умра,
Хыçра,
Йĕри тавра.
Ним сас та çук,
Шăпăрт-шăпăрт, —
Ҫĕлхесĕр шартлама тăрат...

* * *

Çынсем ӳпле майларĕçĕ,
Йытсем йура ҫавса выртаççĕ.
Ăшă тĕтĕм тулан преçент
Вĕсемшĕн маррине ҫухлаççĕ.

Вăрăм çăмлă çемçе тирсем
Çара етемшĕн сĕвĕнеççĕ.
Çакна пĕлеççĕ тĕр вĕсем,
Пĕлсе,
Сиссе ÿпкелемеççĕ.

Пират — малта пыран çулпуçĕ,
Вăл сакăр йытă йађĕпе
Момей сăнне сăнаса хуђĕ:
Виç кун ĕнтĕ каçпа-ирпе
Лоппар шăннă пулла касса
Валеçнĕ кÿлнĕ йытсене.
Çапах та —
Тепĕр мăн сасса
Мантараймаст Пират хăйне.

Çав сасă хаљ нумай ђĕнмест,
Пăхмаст те йытăсем çине.
Анђах Пират ĕненеймест
Оленĕн хуçа маррине.

Вăл, унăн йытă шухăшпе,
Сăнамалла çапла парат.
Çампа пăртак шуркуçĕпе
Пăхса илет вăл лоппара.

Ĕнер ђылай пуллах унтан
Туртса илсеђĕ вăл пĕрре.
Морей патакĕ пит тăн-тăн
Лекет иккен ÿте-тире.

Пайан та ак
Çав лÿпперех
Валеçрĕ йытсене апат.

Хуҫа тухмаст те ӳплерен...
Йӑлтах хуйха ӳкет Пират.

Анҕах лоппар кӗрсе кайсан
Тӗлӗнмелле ӗҫ турӗ йытӑ:
Сасартӑк вӑл
Пуҫне йӑтса
Ҕунтан-вартан,
Ӳпкевлӗн,
Хытӑ
Уласа йаҕӗ те пӗрре,
Пулла хыпса
Утса кӑна
Ӳпленелле илсе кӗрет;
Куҫпа шырат Оленӗна.

Пӑха хурат Оленӗн:
— Ну?
Мӗскер ес, тусӑм, вӑхӑтсӑр?
Ҫитет сире аҕашлану,
Ҫӑмӑр вӑрӑм вӗтха,
Ҕӑтӑр.
... Мӗншӗн, ҫиместӗн?
Ак тата!
Мӗнпе тӑрантӑн?
Ну, кала... —

Аҕашласа вӑл Пирата
Хӑлхи хыҫне сӑтӑркалат.

Пират, пулла пӑрахрӗ те,
Елеклӗн йӑнӑшса илсе,

Пӳне çӳçеннĕн ҫĕтретет
Етемĕн кăмăлне сиссе.
Унтан вăл аҫашлан алла
Тавтунăн çуласа илет,
Вара хаваслăн
Кайалла
Тухса йуртаҭ пуллипеле.

* * *

. . . . . . . . . . . . . . .
—« Çынна никам та
Йытă пек
Йуратаймасҭ çак çĕршывра»,
Тет Нил салхулă ӳкĕтпе
Ҫĕлĕм тивертнĕ хушăра.—
«... Никам та,
Нимĕн те!
Ан ман:
Пăлан та çитеймест йытта.
Çын аçапне
Мĕн авалтан
Кунта пĕр йытă çеç йăтаҭ.
Ҫĕлхи кăна çук мĕскĕнĕн,
Пурне те ăнланаҭ,
Пĕлет.
Анҫах мĕскершĕнха,
Мĕншĕн
Вăл кĕрешет çынпа пĕрле?
Çак утмăл виçĕ кратăсра
Мĕншĕн çӳрес ун пирĕнпе?..

Вĕрет, Морей, ђейне ђарах,
Ман хырăм тирĕ кив пим пек.»
— Сана ку Палеçтинă марим? —
Тет Хай сайра шăлне йĕрсе.
— Çук,
Ман шутпа — вăйлă хĕрарăм
Йытта тăрат, —
Тет вăл хĕрсе.

„Мăнтăр ан пултăр, —
Тет Оленĕн, —
Хыткан, тăн-тăн пулсан —
Тăрат.
Мăнтăррисем
(Еп леккеленĕ)
Пит тӳсĕмсĕр йуратура...

* * *

Лоппар Морей сенкер пăра
Вĕттĕн ката-ката йарат.
Хуран ђашланă хушăра
Çакна такмакласа парат.

«Сире еп пит нумай тăнларăм.
Ăслă сăмахсемех илтеп.
Хĕрарăм тенĕрен...
Хĕрарăм —
Ђăн-ђăн хăватлă вăй пуљ, теп...
Каланăђђĕши еп сире
Атте ман вырăс пулнине?
Пĕлтернĕђђĕши —

Ĕмĕре,
Çак Пăрлă Тинĕс пуллине
Йытсем вађљи касса çеç мар,
Кăшт урăхла та ирттерме
Пикеннĕ йаш шухăшăма?
Кăмăл тусамăр итлеме...

... Нумай пулат̆ ĕнтĕ вăл хаљ,
Вăхăт пайтах ђĕрђун вӗлерђĕ.
Унђух çак сив çанталăка
Сайра йĕлтĕр пырса кĕређђĕ.

Пĕрре,
Тĕтреллĕ ирхине
Ђӳлен тытакансем патне
Еп тухрăм тинĕс хĕррине;
Пĕлместĕп хаљ мĕскершĕнне.

Атте ђӳлен хуçи пулса,
Тен çавăн йунĕ ђĕннĕ тĕр...
Пăхатăп —
Урнă пек хуса
Ђукмарпала çӳрет пĕр хĕр.

Пĕр пăр çинђен теприн çине
Кушак пек çăмăллăн сикег.
Елес-мелес ђӳленсене
Пĕрре çапат̆ те — минтретет.

Хăйулăх,
Меллĕх,
Çирĕп вăй
Мана пит килĕшрĕ хĕрте.
Кĕске кĕрĕкпелеђђĕ хăй, —

Ђăрмавсăр,
Ђух тумтирĕ те.

Ђӳлен тытакансем ăна
Сона тесе ђĕнеççĕ мĕн.
Вĕсен ђĕлхипеле Сона
Т а с а тени пулат иккен.
Хăйсем мĕнле йăх иккенне
Халиђђенех пĕлместĕп еп.
Анђах Сона хĕр пеккине
Курмарăм урăх вĕсемпе.

Вăл урăх йăх пуљ,
Терĕм еп...
Пĕр кун тухап,
Ик кун,
Ерне —
Ман хутăш йунлă ђĕреме
Туртат хĕр тинĕс хĕррине.

Ак сирĕн шурă куркăра
Хăш ђух кăвар çути ӳкет.
Сăнĕ ун çав тĕс хурмăрах,
Куçхаршисем авмак,
Çӳхе... »

Морей пăра хыпса пăхат.

«... Еп те ђӳлен тытма кĕреп.
Ђӳленçĕсен пит айакка
Çын йамалла пулат пĕрре.

Шăпа тытаççĕ етемсем,
Еп пултăм ухатан кайма.
Нумайĕщ пăхрĕç тĕлĕнсе...

— Пеҫҫен сахал,
Тата кама?..
Пёри вилсен тепри ҫёрё.
Асту,
Пёрре те хӑнана
Каймастӑн есё вӑл ҫёре!...
Тесе хистерёҫё мана.

Хампа еп ыйтрӑм Сонана.
Ҫакна илтсессёнех пёри —
Хавшак та хӑлтӑскер кӑна —
Кёвёҫсе ӳкрё ҫав тери.

— Еп те кайатӑп!—
Терё вӑл.
Хӑйён вӑйне шанан етем
Ун пек мухтанҫӑк ҫил-тӑвӑл
Нихҫан та кӑлармаст.
Пёлтём:

Ку хай,
Есир калана пек,
Пёр тӳсёмсёр мӑнтӑр кӑна.
Путех ҫав хулӑнлӑхёпе
Йатне те панӑ —
Такана...

Ҫапах та виҫҫён кайрӑмӑр.
Калас пулат:
Сонашӑн еп
Укҫа парсах тухса;
Мӑшӑр
Пулат, тесе ёмётленеп.

Сона ђӗнмерӗ нимӗн те.
Йытсем майларӑмӑр,
Çуна,
Çимеллисем-мӗнсем ӗнтӗ...
— Лар! —
Терӗç,
Ларђӗ ман çумма.

Инçе,
Инçе Тӑварлӑ Кӳл!
Пӗр кун кайан,
Ик кун,
Виç кун...
Таçта пӗтет сан тавлӑку,
Таçта вӗçӗ-хӗрри çулун.

Никам хутне кӗмен хӗлле,
Çанталӑк хытӑ, хаљхи пек.
Йытсем ваљљи йӗлтӗрпеле
Сукмак хыватпӑр ђеретпе.

Вӑрçат хаи пирӗн Такана,
Вырта тӑрат мур çемçешке.
Тапса тӑраткалап çакна —
Шӑнса ан вилтӗр,
Тетӗпçке.

Çук,
Кайнӑçемӗн хирӗçет:
— Йӗлтӗр ура çумне шӑнат.
Мӗншӗн çак тивӗçсӗр ӗçе
Çыхлантӑмши? —
Тет, —

Камшăн?
А?!..—

Сона ҫĕнместха нимĕн те,
Ӳпкевлĕ сас та кăлармаст!
Ерне ытла ҫулта ĕнтĕ,
Калла май ҫукка таврăнма.

Анҫах апат пĕтсе килет,
Ҫул йывăрланнăҫем йăвăр.
Малтан епир кайас тĕле
Кун ҫухлĕ шутламарăмăр.

Муртан тен Тăварлă Кӳл!
Хĕвел иквиҫ тĕлте пирки
Аташкаларăмăр та пуҫ,
(Ҫулта пулат вăл ун пекки).

Йĕрет вĕт пирĕн Такана,
Арҫын пуҫпа ӳксе йĕрет.
Турттар вăт ҫунапа ăна!..

— Ҫук, —
Терĕ хай Сона пĕрре. —
Епир ăна ҫак хир тăрăх
Ҫăварни ҫуптарма килмен.
Ан тив вăл йултăр,
Вырттăрах,
Шăнса ҫăмăлтарах вилме...—

Ҫакна хăй вилсе курнă пек
Енентерсе калат Сона.
— Йулташ йалан йулташ, —
Теп еп, —
Йепле хăварăнха ăна?..

Сона ђёнмест,
Кайатпăр шав...
Йытсем тӳнеççĕ выçăпа.
Вилсен те пăрахмастпăр çав, —
Шăммие,
Тирĕ те —
Апат.

Канмашкăн ђарăнсан ђасах
Сона йыт ашĕ хатĕрлет.
Куллен пĕрер йыт тăварса
Туха пуçлатпăр ирпеле.

Йулашкинђен тăватă ђун
Тăрса йулаççĕ кӳлĕме,
Анђах шыв урлă каçнă ђух
Вĕсем те пулђĕç пăр айне.

Сона, умне шалçа тытса,
Каçса кайат йĕлтĕрпеле.
Еп паструмккасене касса
Çуна çине йулап тепле.

Таканана аран-аран
Паструмккасем-мĕнсем йарса
Туртса кăлартăмăр шывран,
Ăшăткалатпăр сăтăрса.
Унтан пур пек апатсене
Виç пай туса пайларăмăр.
Сона пăхрĕ те ман çине,
— Çук, терĕ, —
Ку ĕç аван мар.
Çак халсăр пĕђĕк ңаңине

Апат пани хаҫ усӑсӑр,
Тӑварлӑ Кӳлӗн хӗррине
Ҫитесле мар вӑл пурӗпӗр. . —

Еп тепӗр хут:
Ҫулти асап
Пурне те тивтӗр, текелеп,
Ан тив,
Парар та уйӑрса,
Хӑй пайӗпе хӑт пуҫхӗрлӗ...

Унҫҫен те пулаймаст —
Сона
Каш туртрӗ манӑн вуҫвере..
Сиксе ҫӗтрен Таканана
Ӑшӑнма хушрӗ пӗлӗтре...

Еп тӗлӗнеп.
Анҫах ӑшра
Хӗрарӑм тӗрӗсне пӗлеп.
Сона лӑпках пӑхат куҫран:
— Кайар, тет, —
Ан пуҫҫап вилле...»

. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

Калавҫӑ хуҫӗ пурттине.
Итлекенсем ҫӗлӗм ҫӗртсе
Нӑкрах хӗстерҫӗҫ пӗрпӗрне
Ӑшӑ тирсем ӑшне кӗрсе.

Ӳпле тӳпи тӗтӗмпеле
Йӗпеннӗн пасарса тӑрат.

Кăвак тĕтĕмпеле пĕрле
Морей сăмахĕ хăпарат:
«... Кайатпăр.
Еп пуртта йăтап.
Сона çĕклерĕ кĕрĕке.
Виç валĕ тунă апата
Хайхи валеçрĕмĕр икке.

Анҫах тухсах пырат апат,
Çывхарăнмаст Тăварлă Кӳл.
Тăвата путнă йытăпа
Ерне пурнаттăмăрҫҫĕ пуҫ, —
Тесе утатпăр хуйхăрса.
Кунне-çĕрне те мантăмăр, —
Тăр кăнтăрла та вут хурса
Канма тăра пуçларăмăр.

Кайсан-кайсан йулашкинҫен
Тĕл пултăмăр пĕр арçынна.
Етем ҫут çеç шăнса вилмен,
Çитменнине вăл выçăхнă.
Аллисене тăсса,
Темле
Ҫĕлхесĕр йевĕр кĕленсе,
Аран-аран вут патнелле
Çывхарҫĕ вăл упаленсе.
Сона ҫăр пăхрĕ ман çине,
Нихçан капла пăхманҫҫĕ вăл.
Çак выçăхнă çынна
Çиме
Парассăн çутăлҫĕ кăмăл.

— Парари çак çынна çиме?
Хыпар пĕлтерĕ, —
Терĕм еп.
Сона каллех
Пĕр ун çине,
Пĕр ман çине пăхат темме.

Унтан вăл аллипе сĕлттерĕ:
— Çук,
Памăпăр ăна апат,
Тăварлă Кӳл инçеха... —
Терĕ
Тĕреклĕ, çирĕп сасăпа.

Çын йулҁĕ.
Халсăр, пĕр пĕҁҁен...
Çанталăкпа кĕрешнĕскер,
Паллах,
Вăл выçлăх аллинҁен
Ҁĕррĕн хăтăлаймарĕ тĕр...
Утатпăр,
Малаллах,
Çаплах...
Емĕтĕмĕр — Тăварлă Кӳл.
Апат йăлт пĕтрĕ.
Выçăллах
Тăрса сĕнккетпĕр ак пĕр кун.

Сона малтан урасăрланҁĕ,
Пырат-пырат те лап ӳкет.
Манра та нумай мар пек шанҁăк,
Ман ӳтĕм-тирĕм те пӳхет.

Ак Морш Шăлĕ текен скала,
Унтан Тăварлă Кӳл патне
Виç кун кайаççĕ йытпала.
Епир çуран...
Вăйхал пĕтнĕ...

Пăлан Утти тĕлне çитсен
Хĕрарăм ӳкрĕ те —
Тăмаст.
Аран сирен тутисенҫен
Илтетĕп пăшăлтатнă сас.
Хăлхапала выртса тăнлап:

— Арçыннăм, —
Терĕ вăл мана, —
Ман çулăн вĕçĕ çакăнта.
Сан — кайтăр маларан мала...

Сан сивĕ ҫĕрӳнте Сонашăн
Йăва пулмарĕ ыră ҫух.
Ăна ес асаппа сăнасшăн
Ху çине илтĕн йывăр çул...

Калам сана, Морей:
Малтан,
Ес маншăн укçа парсанах,
Ҫĕре сан май выртмарĕ ман,
Сивлерĕм еп ун ҫух сана...

Анҫах ыр çын хăй йыттине
Уссишĕн хĕрхенет куран.
Çаплах ес те Сона çине
Ăшшăн пăхрăн хăйне кура...

Сан шухăшу ăслă, Морей,
Ху есĕ витĕмлĕ арçын.
Çампа ман хуйхăллă ђĕре
Сана сăмахсăр парăнђĕ...

Çуллахи кун
Уйар ђухне
Йĕритавра хĕвел куран.
Çаплах ес те Сона куçне
Хĕвелĕн курăнтăн кайран.

Вара ун ирĕлђĕ пăрĕ...
Сона йалан сана итлерĕ —
Йĕр такăрлатрĕ,
Йыт пăхрĕ,
Нихçан та ывăнтăм темерĕ...

Халђ ун йĕрĕ пĕтрĕ ĕнтĕ,
Пайан кунран ес пĕђђен пырăн.
Анђах сан сивĕ ђĕрўнте
Пулмарĕ маншăн ăшă вырăн...—

— Тĕрĕс, Сона,
Ђăн, — тетĕп еп, —
Пит сивĕ пулђĕ ман ђĕре.
Анђах пайан еп ирĕлеп,
Сан асапу мана ирет.

Хĕрарăмăн йуратуне
Ăнланса çитрĕм епĕ, теп...
Сонан кўтсех пыран пўне
Ђăмăртаса кĕрĕк витеп.

— Еп савăнатăп, —
Тет Сона,

Пуçне хурат ман пуç çумне. —
— Итле, Морей, —
Тет вăл мана:
— Пĕрре еп пĕҫĕксĕ ҫухне
Хам ӳснĕ вăрманта..,
Лере..
Килйыш ухатана кайсан
Пĕҫҫенех йултăм ӳплере
Тирсем çинҫе вăй выҫаса...

Сасартăк алăк умĕнҫе
— Уф! — терĕ пĕр хăмăр упа,
Унҫҫен пулмарĕ —
Ман пиҫҫе
Персе те çитрĕ сăнăпа...

Еп пит хăрарăм:
Пиҫҫене
Упа пĕтĕркелет, ҫикет,
Пĕр хăй пулат пиҫҫе айне,
Пĕр ун сăнни çине лекет...

Пиҫҫен пит-куçĕ йун кăна,
Пӳрни упа çăварĕнҫе.
Çапах та харсăр упана
Вăрçсан-вăрçсан çĕнҫех пиҫҫе...

Сăнарăнши, арçыннăм, ес
Хай епĕр ҫĕртнĕ вут патне
Пырса кĕленнĕ етемме?
Сăнарăни ун сăн-питне? —
Сăн-пиҫĕ çĕвĕлĕҫҫĕ ун.
Сăнарăни аллисене?

Хӑрах пӳрни ҫитместҗӗ ун,
Тӗпӗ кӑна пӗр пуҫпӳрнен...

Вӑл ман пиҗҗеҗҗӗ.
Еп ӑна
Апат памарӑм выҫӑ җух,
Вӑл —
Манӑн пурнӑҫа ҫӑлнӑ;
Унтан хакли вӗт ним те ҫук...

— Тӗрӗс, Сона,
Җӑн, — тетӗп еп, —
Унтан хакли ҫук ҫӗр ҫинҗе... —
Сисетӗп хам —
Пит йерипе
Тапаҭ җӗри ун кӑкринҗе.

Вара вӑл ман алла илсе
Хӑйӗн хӳне җикет хуллен.
— Арҫыннӑм, тет, —
Ҫакна ҫисе
Ес ҫитӗн Тӑварлӑ Кӳле... —

Шанатри ватӑ пуҫӑма? —
Йекӗр ҫӑмӑр пек хутаҫпа
Аш тыттараҭ мана Сона,
Тӳсе тултарнӑ типӗ аш!

Тин җухласа илетӗп еп
Мӗншӗн вӑл җас ывӑннине...
— Ҫук!
Ман йӗрӗм те пӗтгӗр, теп, —
Тӑварлӑ Кӳл ҫӑва ҫине!.. —

— Морей,
Тет пит хуллен хĕрарăм, —
Ан ултала хăвна хаљ тин.
Сана еп паттăрăн кураттăм,
Хăçан та паттăр пул еппин...

Çук,
Ак хăвар ман кăмăла,
Шансах вилес килет сана.
Малтан мала,
Малтан мала
Пырат сан çулă... —
Тет Сона.

Сан умăнта пĕтрĕ ман парăм,
Ак сывлăш та пĕтет ĕнтĕ...
Нумай пуйан, ђипер хĕрарăм
Тĕл пулăн ес ĕмĕрӳнте.
Анђах пĕри те Сона ђухлĕ
Йуратмĕçĕ вĕсем сана... —

. . . . . . . . . . . . . . .

Асап тумламĕ —
Вил куççулĕ
Тухса шăнса хытат Сонан...»

Морей ђей хуранне вĕçерђĕ.

«... Тем пысăккăш çак йурату,
Вĕçĕхĕррисĕр унăн терђĕ,
Хăватлăх та, ђăтăм та ку. —

Пĕр варлă выçă пиђђĕшне
Апат памарĕ çул çинђе,
Вăл çеç те мар —

Хăй çимĕçне
Татса хăварҫĕ хăйĕнҫен. —
Çапла вăт йурату асап.
Çапла Пăлан Утти панҫе
Пуç хунă хĕр
Сона — Таса».
Калавçă шăппăн ҫарăнҫĕ.

* * *

Йытсем теме сиссе улаççĕ.
Пасарнă,
Çăмламас Пират
Ўпленелле йуртса пырать.
— Мĕн пулнăши?.. —
Çынсем тухаççĕ.
Çĕрле.
Сипсивĕ çăлтăрсем
Салхун çунаççĕ тўпере.
Кăвак хуппи ҫĕтрентерсе
Çанталăка „сăн ўкерет".
Малтан ак пĕриквиç тĕлте
Шевле пек кĕренрех хумсем
Пĕр сасăсăр
Шăппăн хўсе
Сăрлаççĕ хăмăр пĕлĕте.
Унтан шăп полҫус тĕлĕнҫен
Тем пысăккăш çавра хапха —
Кăваккăн,

Симĕсĕн,
Тĕрлĕн —
Карса илет çанталăка.

. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . .

Çак аслă асамат кĕперĕ,
Çак ĕмĕрхи тĕнçе илемĕ
Миçе курсан та тĕлĕнтерĕ,
Никам та йăлăхтарçĕ темĕ...

---

Хакĕ 1 т. 50 п.
Цена 1 р. 50 к.

х.—3

ХУЗАНГАЙ П.

СТИХИ и ПОЭМЫ

На чувашском языке

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР
Москва, центр, Никольская, 10